# "Шупашкар-Арена" Пăр керменĕнче тĕнче, Европа чемпионки Ирина Слуцкая фигуристсен шкулне уçасшăн • 4 стр.

ХЫПАР

1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр... Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

# Чăваш ХĔРАРĂМĔ

21(891) №, 2015, çĕртме/июнь, 6

Хакĕ ирĕклĕ. 16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

• Аслă Слакпуç ялĕнче... 2 стр.
• Миллионĕ-миллионĕпе вилет пыл хурчĕ. 3 стр.
• Яппун кăшманĕ. Шултра кишĕр ӳстерес тесен... 8 стр.
• Шӳтле-шӳтле... авлантартăмăр. 9 стр.

ÇĂЛТĂР ÇӲПÇИ

## Пуçлăх та, тирпейлӳçĕ те...



Владимир ГРИГОРЬЕВ, ЧР тава тивĕçлĕ артисчĕ

Вилĕмсĕр "Нарспири" йĕркесем аса килеççĕ. "Пĕтĕм тĕнче хушшинче эсĕ пултăн ытлашши" текенни пурччĕ унта. Çук-çук, хам пирки мар сăмахăм, ытлашшийĕ... культура пек туйăнать. Ытти сферăра, калăпăр, наци проекчĕсем йĕркелеççĕ, вĕсемпе усă курса сывлăха упрама, ялхуçалăха аталантарма, çурт-йĕр çĕклеме пулать. Культурăра вара çакăн йышши проектсем çук. Юлашки вăхăтра телекурав спорт пирки çавăрттарать кăна. Культура вара... Чăнласах никама та кирлĕ мар-им?

Çапла, иртнĕ çул Культура çулталăкне паллă турăмăр, кăçал вара çакнах Раççей палăртать. Шел, çак тытăмра ырă улшăнусем пурпĕр курăнмаççĕ. Пачах тепĕр май, çĕршыв, республика шайĕнче палăртакан çулталăксене эпир тӳнтерле кăна пурнăçлама хăнăхнă ахăр. Ара, пĕлтĕр чăваш культура ĕçченĕсем республикăри Халăх пултарулăх çурчĕсĕр тăрса юлчĕç. Унта ĕçленисем халĕ Шупашкарти культура пĕр керменĕн икĕ пӳлĕмĕнче хĕсĕнсе лараççĕ. Ахăртнех, çапла майпа халăх пултарулăхне – ылтăн та мерчен еткерлĕхне – аталантарса тĕнче шайне çĕклесшĕн...

Кăçал та савăнмаллиех çук. Ялти клубсенче штатра пĕр çын кăна хăварчĕç: пуçлăх та вăл халĕ, тирпейлӳçĕ те, кочегар та... Тен, хореограф та, концертмейстер та? Ку та культурăна вăйлă аталантарма пулăшать пулинех.

Япăхпа калас килмест, çапах та сусăрсемпе çыхăннă проектсем валли "симĕс çутă" пирĕн, ахаль çын каллех – иккĕмĕш вырăнта. Хамăр вара ĕçкĕçсен, наркомансен йышĕ ӳссе пыни çинчен калаçатпăр. Кашни çамрăка явăçтармалла культура мероприятийĕсене! Шалтан кăштах силлемелле. Тепĕр чух çакă та усал йăларан писме пулăшать.

СССР халăх артисткин Вера Кузьминан вулавĕсене ирттертĕмĕр. Хăй алă пуснă дипломсемпе хăй чысларĕ вăл пултаруллисене. Çамрăксен куçĕсем çак самантра мĕнле çиçнине курасчĕ сирĕн! "Юмах çăлкуçĕ" фестиваль хыççăн Вăрмар районĕнчен пĕлтерчĕç. Унта хутшăннă çамрăкăн амăшĕ класс ертӳçине ачине çак проекта хутшăнтарнăшăн куççульпе тав тунă – пепки çакăн хыççăн вĕренӳре те туртăннă-мĕн, тыткаларăшĕ те улшăннă. Пĕр сăмахпа, ачан пурнăçĕ йăлт тепĕр – лайăх – еннелле çаврăннă...




# Ирĕклĕхре, шур хурăнсен хушшинче...

Çул пĕр енĕпе – вĕçĕ-хĕррисĕр уй, тепĕр енче – çамрăк хырсем, вĕтлĕх, шап-шурă чечеклĕ çĕр çырли уçланкисем... Йĕри-тавра нимĕнле ял та çук. Аслă Кăршка еннелле шăтăк-путăклă, вырăн-вырăн курăк пусса илнĕ çул илсе каять. Виç-тăватă пӳртлĕ хăйне евĕр çынсемлĕ яла тахçанах кайса курас ĕмĕт-шухăш пурччĕ-ха. Çуркунне: «Унта шыв-шур типмесĕр ниепле те çитме çук. Пирĕн патран та пилĕк çухрăм каймалла», – терĕ Çĕрпӳ районĕнчи Кăнар ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Руслан Николаев. Çĕртмен чăтма çук шăрăх кунĕсенчен пĕринче Аслă Кăршкана ятарласах çитсе килме тĕв турăмăр. Çул тăршшĕпе: «Çумăр çеç ан çутăрччĕ, унсăрăн ку чăтлăхран тухса та пĕтеес çук», – сукмак пек ансăр çулпа вĕçтерсе пынă май ăшăмра пĕр вĕçĕм каялла йĕркеллĕ таврăнасси пирки кăна шухăшласа пытăм.

*Аслă Кăршка Çĕрпӳ хулинчен 28 çухрăмра вырнаçнă. 1794 çулта асăннă ялта пĕтĕмпе те ултă кил çеç пулнă, 1879 çулта унта 307 çын таранах пурăннă. Аслă Кăршкасем Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шĕнерпуçĕнчен куçнă. 1920 çулччен земство шкулĕ /кайран вулав çурчĕ/ тата тăватă арман пулнă кунта. 1929 çулта «Вулкан» колхоз йĕркеленнĕ. Вырсарни вулăсĕн Шупашкар уесне кĕнĕ ун чухне асăннă ял. Кăршка ятлă тĕне кĕмен чăваш куçса ларнă-мĕн малтан. Кăнарта пурăнакан аслă ăру çыннисем каланă тăрăх, вĕсен вăхăтĕнче те /70-80 çул каялла/ кĕрлесе кăна тăнă Аслă Кăршка. 1999 çул тĕлне çак тăрăхра 16 кил пулнă-тăк паянхи куна пĕтĕмпе те 5 çеç юлнă. Çыннисем – пурте тĕрлĕ çĕртен куçса килнĕскерсем.*

ÇАНТАЛĂК

| | кăнтăрла | çĕрле | |
|---|---|---|---|
| 06.06 | +15 | +14 | |
| 07.06 | +20 | +14 | |
| 08.06 | +25 | +17 | |
| 09.06 | +21 | +18 | |
| 10.06 | +21 | +16 | |
| 11.06 | +18 | +13 | |
| 12.06 | +19 | +14 | |

АСТĂВĂМ

# Аслă Слакпуç ялĕнче...

**"Иртрĕ çимĕк, иртрĕ туй, иртрĕ туйри савăнăç", – вулатпăр Константин Ивановăн "Нарспи" поэмăри "Çимĕк иртсен" сыпăк пуçламăшĕнче. Çапла, кирек мĕнле аслă уяв та, кирек мĕнле туй-çуй та вăхăчĕ çитсен иртетех. Çапах та уявĕ чăн-чăнниех пулсан, ăна такама юрассишĕн шухăшласа кăларса ячĕшĕн иртермен пулсан – унăн сăваплă çути çав уяв тепре килсе çитиччен пĕтĕм чун-чĕрене вăй-хăват парса, хавхалану кÿрсе тăрать. Халăх юратакан Константин Ивановăн çавра çулĕсем пирки те çакнах каламалла. Чăваш литературин классикĕн 100 çулхи юбилейне нумаях та пулмасть, тин кăна-ха ЮНЕСКО шайĕнче сулмаклăн кĕрлесе иртternĕ пек туйăнать – пăхăсăн, 125 çулхи те шавласа иртсе кайрĕ.**



"Иртсе кайрĕ" тени тĕрĕсех те мар, унăн малашлăха çул хывакан таса çути пирĕн чĕререх-çке. Ахальтен мар Слакпуçĕнчи тĕп уявра Раиса Сарпи поэт: "Константин Ивановăн 150 çулхи юбилейне те кунта килетĕпех!" – тесе каласан пĕтĕм халăх хавхаланса та йăл кулса тăвăллăн алă çупрĕ. Пурин те, пурин те пулас килет-çке "Нарспи" авторĕн юбилейĕ вăхăтĕнче вăл çуралнă тăрăхра: Слак шывĕн шăнкăр-шăнкăр сассине илтсе киленес, унти çăлкуç сиплĕхне туйса курасах килет. Пĕр шутласан, нумай-и 25 çул? Çĕнĕ ăру çуралса вăй илмелĕх, Слакпуç тăрăхне çĕнĕ варкăш илсе килмелĕх кăна. Тепĕр енчен, Константин Иванов хăй чĕрĕк ĕмĕр те пурăнайман, 24 çул та 10 уйăхра ĕмĕрлĕхе куçне хупнă. Апла пулин те вăл чи ăста çĕр ĕçченĕ чи паха вăрлăха илпек те пулăхлă тăпра çине пĕр шеллемесĕр ывăçла-ывăçла вăрăнтарнă пек хăйĕн пĕтĕм талантне, иксĕлми çутăлăхне чăваш халăхĕн чун-чĕрине ĕмĕрсем урлă малашлăха хывса хăварнă. Чăваш халăхĕнне кăна-и тата? Унăн "Нарспи" поэмине тата унти хăш-пĕр сыпăксене çирĕме яхăн чĕлхене куçарнă. Кун пирки, поэт çуралнăранпа 125 çул çитрĕ пулин те, Константин Иванов пултарулăхне сарас ĕçĕн чи хĕрÿ тапхăрĕ кăна-ха, вĕçĕ мар теме пултаратпăр.

Шупашкар хыççăн Пелепей хулинче тата Слакпуçĕнче иртнĕ юбилей мероприятийĕсене Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин Культура енĕпе ĕçлекен комитет председателĕн заместителĕ, Пушкăртстан халăхĕсен ассамблейин Канашĕн ертÿçи Зугура Рахматуллина, Пушкăртстан Республикин культура министрĕн пĕрремĕш заместителĕ Валентина Латыпова хутшăнчĕç. Пирĕн республикăн официаллă делегацине Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн заместителĕ – информаци политикипе массăллă коммуникаци хатĕрĕсен министрĕ Александр Иванов ертсе пычĕ. Чăваш халăхĕн "элчисен" йышĕнче ЧР вĕренÿпе çамрăксен политикин министрĕ Владимир Иванов, ЧР культура министрĕн пĕрремĕш заместителĕ Альбина Алексеева, культура учрежденийĕсемпе массăллă информаци хатĕрĕсен ертÿçисем тата паллă чăваш поэчĕсемпе писателĕсем, художникĕсемпе скульпторĕсем пулчĕç. Константин Ивановăн тăван тăрăхĕнче хăнасене çăкăр-тăварпа, пушкăрт кăмăсĕпе, чăваш чăкăчĕпе тата, паллах, савăк кăмăлпа тата ташă-юрăпа кĕтсе илчĕç.

Чăваш наци конгресĕн президенчĕ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ Николай Угаслов ертсе пыракан делегаци Слакпуçне май уйăхĕн 28-мĕшĕнчех килсе çитнĕ. ЧНК пуçарнипе кунта çак кун чăваш литературин классикĕн К.В.Ивановăн тата Раççей Федерацийĕнчи Литература çулталăкĕсене халалланă Пĕтĕм Раççейри "Аслă Силпи ялĕнче"... халăх пултарулăхĕн фестивалĕ уçăлнă. Эпир "Нарспи" авторĕ çуралнă яла тепĕр кунне кăна килсе çитрĕмĕр те, фестивалĕн чăн хăвачĕ пирки ыттисем каланă тăрăх кăна хаклама пултаратăп. Çăлкуç патĕнче иртнĕ савăнăçлă митинг хыççăн Слакпуçĕнчи культура çурчĕ умĕнчи концертпа киленнĕ вăхăтра мана пĕр хĕрарăм: "Ах, сирĕн ĕнерех килсе çитмеллеччĕ. Мĕнле чаплă уяв туса пачĕç кунта çĕркаç! Çамрăксем çĕрĕпех ташларĕç", – терĕ. Калаçса кайрăмăр та, ку – нумай çул Слакпуç шкулĕнче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентнĕ, кайран 15 çул Константин Иванов музейĕнче ĕçленĕ Римма Мироновна Петрова пулчĕ. Поэтăмăрăн 100 çулхи юбилейне те лайăх астăвать вăл. Ун чухне "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçатран çак уява Александр Вражкин килни, кайран республика кăларăмĕнче пысăк статья çырса кăларнине те асăнчĕ вăл.

– Ун чухнехи уявсем хальхисенчен мĕнпе уйрăлса тăраççĕ-ши? – ыйтрăм унран.

– Вĕсене ытларах учительсем, халăх хăй йĕркелетчĕ. Халĕ йăлтах çÿлтен хушнипе, патшалăх шайĕнче пулса иртет пулмалла, – терĕ вăл. Римма Мироновна, эпĕ ун çине тĕлĕнерех пăхнине сисрĕ те: "Паллах, ку питĕ лайăх", – тесе хушса хучĕ. Унпа калаçнă хушăра ватă учительница патне темиçе хутчен те пырапыра сывлăх сунчĕç. "Ахăртнех, вĕренекенсем", – шухăшласа илтĕм те эпĕ, тепĕр ыйтăвне те çак темăпах патăм.

– Сирĕн ялта, ак, чăваш халăхĕн чи юратнă ывăлĕ Константин Иванов çуралнă. Чăваш халăх поэчĕ Ухсай Яккăвĕ те Слакпуçĕнчи куççуль пек тăп-тăрă çăлкуç шывне ĕçсе ÿснĕ. Хальхи ăру мĕнлерех пек? Шанăç паракannисем пур-и?

– Вĕрентнипе, çÿлтен хушнипе пулакан япала мар çав Константин Ивановăн тĕлĕнмелле таланчĕ. 100 çулта пĕрре килекен асамлăх... Вăйпа хистенипе, вĕрентнипе кăна нимĕн те тăваймастăн. Турă пани кирлĕ...

Турă пани... Çÿлти таса сывлăшпа тÿрĕ çыхăнура тăмасăр пĕтĕм халăх чунне ĕмĕрлĕх хăват паракан хайлав çырма ниепле те май çук-тăр çав. Каллех "Нарспи" сыпăкĕ аса килет...

Çавтер ырă ачана
Турă чунне панă çав,
Кулса сиксе выляма
Кайăк чунĕ янă çав.
Çичĕ çулхи ачара
Чăваш чунĕ ларать çав.
Пĕчĕк куçĕ йĕрсен те,
Иăваш тути кулать çав.

Шăпах çавăн пекех йăл кулăллă ачасемех чупса çÿретчĕç Раççей шайĕнчи уява кура çăмăл машинăсемпе, газельсемпе, автобуссемпе тулса ларнă Слакпуç урамĕ тăрăх. Шăнкăр-шăнкăр çăлкуç патĕнчи уяв митингĕнче вара çак ял шкулĕнче вĕренекен ачасем, "Силпи асамачĕ" фестиваль лауреачĕсем хăйсен пултарулăхне кăтартрĕç. Тăваттăмĕш класс хĕрачисем Юлия Беляевăпа Карина Павлова "Илемлĕ" юрра шăрантарчĕç, вуннăмĕш класра вĕренекен Диана Данилова Нарспи монологне вуларĕ.

Ытармалла мар хитре чăнчăн чăваш тумĕ тăхăннă хĕрхĕрарăмсемпе ача-пăчаран вĕсем ăçтан килнине ыйтмасăр тÿсеймерĕм. Пушкăртстанри Кăрмăскал районĕнчи Суук Чишма ялĕнчи "Шевле" халăх ансамблĕ иккен. 18 çынран тăракан йышран саккăрăшĕ – шкул ачи. Пуçламăш классене вĕрентекен Ольга Иванова кунта йăлтах çав тери килĕшнине пĕлтерчĕ. "Питĕ хитре, сывлама та уçă... Сивĕ çăлкуçне ĕçсе тăранма пулмасть", – терĕ вăл. Тумĕ пирки ыйтсан çапла хуравларĕ: "Çак кĕпепе анне качча тухнă. Халĕ эпĕ ăна туйсенче тата аслă уявсенче кăна тăхăнатăп"...

Çапла, Константин Иванов çуралнăранпа 125 çул çитни пĕтĕм чăваш халăхĕшĕн чи пысăк уяв. Тепĕр тесен, чăвашшăн кăна-ши? Çук пуль. Пушкăртстан халăхĕшĕн те чи пĕлтерĕшлĕ уявсенчен пĕри ку. "Нарспие" тăванла чĕлхене куçарнă Пушкăртстан халăх поэчĕн Мустай Каримăн Ильгиз Мустаевич ывăлĕпе Альфия Мустаевна хĕрĕ те килсе çитнĕччĕ Слакпуçне. Константин Иванов музейĕнче пулса курнă хыççăн Альфия Мустаевна кунта хăйне çав тери килĕшнине пĕлтерчĕ. Кайран вĕсем пиччĕшĕпе пĕрле Ухсай Яккăвĕн музейне те çитсе курчĕç. Официаллă делегаци умĕнче икĕ халăх поэчĕн хĕрĕсем Ольга Яковлевнăпа Альфия Мустаевна тĕл пулнине хăйнеевĕрлĕ историллĕ пулăм теме те пулать-тĕр.

Тĕлĕнмелли, чăнах та, нумай пулчĕ ку уявра. Те хавхаланăвĕ иксĕлми пулнăран, Слакпуçĕнчи тапхăр-тапхăр килсе çăвакан ачаш та ăшă çумăра Светлана Асамат: "Ку ахаль çумăр мар, Константин Ивановăн савăнăç куççулĕ", – тесе хакларĕ. Куççуль – тасатакан хăват. Апла çумăрĕ те ятарласа пире тасатма янăскер. Кулленхи ниме тăман арăш-пирĕш харкашупа тиркешÿрен, кĕвĕçÿпе ăмсануран тасалса çĕнĕ Константин Ивановсене çуратма янăскер...



**Римма ПРОКОПЬЕВА.**
**Шупашкар – Пелепей – Слакпуç.**

Лидия ФИЛИППОВА сăнÿкерчĕкĕсем.



ÇĔРТМЕ, 5: ЭКОЛОГ КУНĔ

# Этемлĕхе пылак эмел парнелекенсен пурнăçĕ тавра...

**Пыл сиплĕхĕ пирки пурте пĕлетпĕр. Унпа пирĕн несĕлĕмĕрсем те сипленнĕ. Анчах çак эмеле парнелекен хурт-кăпшанкă йышĕ куç умĕнчех чакса пырать.**

**"Пыл хурчĕсем вилсен этемлĕх пурнăçĕ 4 çула тăсăлĕ"**

2006 çулхи хĕлле тĕнчере 1 млн ытла пыл хурчĕн çемйи пĕтнĕ. Çутçанталăкра тем пек кирлĕ çак хурт-кăпшанкă шучĕ палăрмаллах чакса пыни ăсчахсемшĕн те – ăнланмалла мар пулăм.

Пыл хурчĕ – улма-çырла йывăççисене тата тĕмсене шăркалантаракан тĕп хурт-кăпшанкă. Тĕнчери çимĕçсен 35 проценчĕ шăпах вĕсене пула тĕвĕленнине палăртаççĕ специалистсем. Çакна укça çине куçарсан 160 млрд европа танлашать иккен, палăртам – пĕр çулта кăна. Пыл хурчĕсем çухалсан вара 400 млрд евро таран тăкак тÿсĕ этемлĕх.

Ÿсен-тăранпа пĕрле вара кислород та, шыв та, çимĕç тата топливо та çухалать. Ахальтен мар Эйнштейн: "Пыл хурчĕсем вилсен этемлĕх пурнăçĕ 4 çула тăсăлĕ", – тесе каланă. Чим-ха, пыл хурчĕсен шучĕ чакса пынинче çынсем хăйсемех айăплă мар-и-ха? Ял хуçалăхĕнче пестицидсемпе тата хими ытти япалипе усă курни – хурт-кăпшанкă иммунитетне хавшатнин сăлтавĕсенчен пĕри пулнине палăртать Чăваш Енри тĕпчевçĕ Игорь Мандебейкин та. Пестицидсем сапнă ÿсентăран çине ларнă пыл хурчĕ самантрах наркăмăшланма пултарать. Анчах та хăш-пĕр токсиканта "ас тивнĕ" нăрă тем вăхăт пурăнаять, çак кĕске вăхăтра хими лекнĕ нектара йăвана илсе кĕртсе ĕлкĕрет. Çапла пыл хурчĕн çемйи пусĕпех пĕтет.

Кунсăр пуçне вĕсемшĕн уйсенче ĕçлекен техника хăрушлăх кăларса тăратать. Россельхознадзорăн республикăри управленине Улатăр тăрăхĕнчен çыру килнĕ. Темиçе çул ахалех выртнă çĕре сухалаcalled тăкнишĕн тарăхнине пĕлтерчĕççĕ хурт-хăмăр ăстисем. Çак вăхăтра унта 5 сорт клевер, илепер курăкĕ, сар çип ути, матрÿшке тата ытти ешерме тытăннă. Çапла çав лаптăка пыл хурчĕсем иленнĕ. Анчах çĕрсене пусă çаврăнăшне кĕртме пикеннĕ май пыл хурчĕсен пĕтме пуçланă. Çакăншăн айăплисене явап тыттарма ыйтнăччĕ çыру авторĕсем.



Управлени ĕçченĕсем çырăва тимлĕхсĕр хăварман паллах. Анчах та кама та пулин айăплама инспекторсен сăлтав çук темелле, мĕншĕн тесен ку ведомство ĕçченĕсен ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсене тĕрĕслеме кăна ирĕк пур. Çырура кăтартнă тĕслĕх вара Çĕр саккунĕсене пачах та хирĕçлемест. Пачах тепĕр май – республикăн пушă выртакан çĕрсемпе кĕрешессипе çыхăннă тĕллеве пурнăçлани.

**Пĕр-пĕрне хисеплесчĕ!**

Чăваш Республикинче пыл хурчĕ ĕрчетекенсен йышĕ 5 пинрен те иртет теççĕ. Пĕришĕн ку – чун киленĕçĕ, иккĕмĕшĕсемшĕн – услам çăлкуçĕ. Апла-и, капла-и – çапах та кунашкал аппалану кÿршĕсене чăрмав та, сиен те кÿмелле мар.

Анчах та Россельхознадзорăн республикăри управленине çăхавсем килсех тăраççĕ. Паллах, специалистсем кашнинчех лару-тăрăва вырăна тухса уçăмлатаççĕ. Инспекторсем ку ĕçе вырăнти ветеринари специалисчĕсене те, хăй тытăмĕнчи ĕçченĕсене те явăçтараççĕ.

Чăваш Республикин "Пыл хурчĕсем ĕрчетесси тата пыл хурчĕсене тата шăркалантаракан тискер хурт-кăпшанка хÿтĕлесси" саккунĕн 4-мĕш статйипе килĕшÿллĕн юридици сăпатĕнчи çынсем те, граждансем те хурт-хăмăр тытма пултараççĕ. Пыл туса илесси – саккуна пăсни мар. Апла çынсем мĕнпе кăмăлсăр?

Вăрнар районĕнчи О., калăпăр, кÿрши вĕллисене унăн пÿртĕнчен инçех мар тытнăшăн. Пахчара ĕçленĕ чухне пыл хурчĕсем пĕрмаях сăхнине пĕлтерет вăл. Кăнтăрла пахчара ĕçлеме май çук-мĕн. Вĕллесен шучĕ çулсерен нумайланса пынине те палăртать. Вĕсене пурăнмалли вырăнта вырнаçтарассин нормативĕсене пăснине пĕтермешкĕн ыйтать.

Патшалăх инспекторĕ В. Матвеев çăхавра асăннă яла çийĕнчех çитсе килчĕ. Чăнах та, утар территорине çÿллĕ карта тытса уйăрман. Вĕллесене территори чиккинчен 1 метртан инçе мар вырнаçтарнă.

Çÿлерех асăннă саккунăн 4-мĕш статйинче уйрăм çын утарĕнче пыл хурчĕсен шучĕ мĕн чухлĕ пулмаллине палăртнă – "чикки çук".

5-мĕш статйинче вара çынсене тата чĕрчунсене хăрушсăрлăхпа тивĕçтерес тĕллевпе ялсен чиккисенче вĕллесене юнашар çĕр лаптăкĕнчен 10 метртан кая мар вырнаçтарма е 2 метртан пĕчĕк мар карта, хÿме е симĕс /йывăç-тĕм е ытти курăк/ çатан тытмашкăн сĕннĕ. Палăртсах хăварас килет – шăпах "сĕннĕ" тесе çырнă. Çавăнпа та инспекторсем ку енĕпе çине тăрса хушма та пултараймаççĕ.

"Пыл хурчĕсен чирĕсене, наркăмăшланассине асăрхаттарассин тата тĕп сăтăрçисене тĕп тăвассин мероприятийĕсен инструкцийĕ" 1.7 пункчĕпе килĕшÿллĕн, кашни утарăн ветеринари-санитари паспорчĕ пулмалла. Унта утарăн санитари лару-тăрăвĕ пирки çырсах тăраççĕ. Кунашкал документ çукки РФ КоАПĕн 10.6 статйин 1-мĕш пайĕпе айăплама май парать. Районти чĕрчунсен чирĕсемпе кĕрешекен станцире те асăннă хурт-хăмăр ăсти ерекен чирсене тĕрĕслеттерме пробăсем илсе килменнине çирĕплетнĕ. "Ветеринари çинчен" саккун тăрăх вара чĕрчунсен сывлăхĕшĕн хуçи яваплă.

Сăмах май, çак саккунрах хуçисен чĕр-чунĕсем чирлесрен кирлĕ мероприятисем ирттермеллине палăртнă. Вĕсене пурăнмашкăн тата чĕрчун продукцине тирпейлемешкĕн, упрамашкăн тата сутмашкăн вырăн хатĕрленĕ чухне зоогигиена тата ветеринарипе санитари правилисене пăхăнмалла.

Пыл юратакан кÿршĕн шăпах ветеринарипе санитари паспорчĕ пулман. Çакăншăн ăна управлени патшалăх инспекторĕ административлă майпа явап тыттарнă.

Ваттисен çын йăнăшĕнчен вĕренме хушнă. Çырусенче çырса кăтартнă лару-тăру пĕрешкелтерех. Çынсем кÿршин пыл хурчĕсем сăхнипе питĕ кăмăлсăр. Ветеринари специалисчĕсем утар тытакансене çакна шута илме тата çÿлерех асăннă çитменлĕхсене сирме ыйтаççĕ. Пĕр-пĕрне хисеплесчĕ!

**Надежда ВАСИЛЬЕВА,**
**управлени ĕçченĕ.**

СĂМАХ ПАРĂР-ХА

# “Мăйракаллă йытă...”

**Маргарита ИЛЬИНА**

**– Анне, анне, кур-ха: “Милки вей!” – хуларан яла çула тухнă автобуса янратса кăшкăрать шăпăрлан. Мультик унăн куçĕ тĕлне ăстан лекнĕ тетĕр-и? Ниçтан та мар, кĕтÿ яла таврăнать – çавă кăна. Тулли çиллисене енчен-енне суллантарса утакан ĕнесене курсан ача телевизорпа тăтăш çаврăттаракан рекламăна аса илнĕ. Ара, шăккалат тума сĕт кирлĕ, усăллă çак шĕвеке вара... “Милки вей” парать. Ача шухăшĕпе.**

**Пĕр шухăшласан, кулăшла пек. Автобусра ларса пыракансем те шăпăрлана йăл кулă парнелени пирки иккĕленместĕп – ĕçĕ ку журналистăн пуян фантазийĕнче çуралнăскер мар, чăн пурнăçра пулса иртнĕскер. Анчах тепре шухăшласан – йĕрес те килет. Ара, ачамăрсем ют планета çинчен килмен-çке, хамăрах воспитани парса ÿстеретпĕр. Чăн та, яла ашшĕ-амăшĕ, тăванĕ-пĕтенĕ патне тăтăш çÿрекенсемшĕн хăрушă мар-ха ку – ача-пăча çутçанталăкран пачах уйрăм ÿсмест çапах та. Анчах та пурин те кун пек май та çук-çке. Нумайăшĕ авă килти выльăха та рекламăран кăна пĕлет те, тискер кайăкпа кайăк-кĕшĕк çинчен мĕн каласмалли пур?**

**Ыйтăвĕ вара çивĕччисенчен пĕри темелле. Тăван тавралăха юратма-упрама мĕн пĕчĕкрен хăнăхтармасан каярахпа, ÿссе çитсен, экологи хăрушсăрлăхĕ çинчен шухăшлама пуçлать-ши çын?**

**Ял ачисем пирки, паллах, сăмах хускатма кирлех мар. Ĕлĕкхи пек колхоз уй-хирĕнче ашшĕ-амăшĕпе пĕрле пилĕк авмасан та кил хуçалăхĕнче те тăрмашмалли самай тупăнать унăн. Пахчари калча епле ешерсе çĕкленнине сăнани, тавралăх симĕс тумпа витĕнни, шăпчăк каçăхса кайса юрланипе киленни кирек кам чунне те хускатать. Хула ачисем çакăнтан айккинчен тăрса юлмаççĕ-ши тесе ятарласах Шупашкарти ачасен клубĕсен сайчĕсене тишкертĕм. Вĕсенче ачасене епле аталантарни чылайăшĕн ятĕнченех паллă: ”Умничка”, “Умные детки”, “Маленький гений”, “IQ007, “Умники и Умнички”, “Пишичитайка”... Çак клубсемпе центрсенче ачасем вăхăта пĕр евĕрлĕрех ирттереççĕ – чи пĕчĕккисене шкула хатĕрлесе вуламаçырма хăнăхтараççĕ, акăлчан чĕлхине вĕрентеççĕ, хускану профильне суйласа илнисем батутсем, лабиринтсем, тĕрлĕ аттракцион сĕнеççĕ. Интернета “Ачасен клубĕсем” сайта вырнаçтарнă списокри 82 пĕлтерÿрен “Ачасен академийĕнче” кăна математика, акăлчан чĕлхи, музыка, ташă тата ытти предметпа пĕрлех “Тăван тавралăх” тенине кăтартнă. Теме вĕрентме те шантараççĕ ачасене: йога та пур, супăнь пĕçересси те – тăван тавралăхпа çыхăну йĕркелесси кăна никамăн асĕнче те çук. Тепĕр тесен, вĕсем пурте тенĕ пек коммерцилле центрсем вĕт, апла тăк ертÿçисене чи малтанах услам кăна илĕртет.**

**Телее, пурте çак çул-йĕрпе утмаççĕ. Кăçал Шупашкарта пĕрремĕш хут Çутçанталăк тусĕсен фестивалĕ иртрĕ. Шăпах ĕнер – çĕртме уйăхĕн 5-мĕшĕнче, Эколог кунĕнче. Тĕп хуламăрта кăна мар-ха, Раççейĕпех пĕрремĕш хут йĕркелеççĕ ăна /çакă ыйту çивĕчленсе ситнине пĕлтермест-и вара?/. Пĕтĕм Раççейри ачасен экологи фестивальне пирĕн тăрăхра ЧР Çутçанталăк министерстви, Шупашкарти Ачасемпе çамрăксен пултарулăхĕн кермене, патшалăхăн “Сăр ен” заповедникĕ йĕркеленĕ. Фестиваль тĕллевĕ пархатарлă – ачасен экопĕлĕвне анлăлатасси, çын çутçанталăкăн пĕр пайĕ пулнине ăнлантарасси, тăван тавралăха упраме хăнăхтарасси, çамрăксене çутçанталăк пуянлăхĕпе перекетлĕ усă курма хăнăхтарасси. Республикăри вĕренÿ заведенийĕсенче ăс пухакан çамрăксем пĕлĕвĕсене биологи, экологи, географи енĕпе “Эколабиринтра” тĕрĕслерĕç, Чăваш Республикинчи уйрăмах сыхлакан лаптăксене пĕлнине те çирĕплетрĕç.**

**Шанас килет, çакăн евĕр ăмăртусем тĕллевĕсене пурнăçлаççех. Ун чухне хула ачисем яла аслашшĕ-асламăшĕ, кукашшĕ-кукамăшĕ патне çитсе ĕнене курсан “йытă та мăйракаллă” пулнинчен тĕлĕнме пăрахĕç. Мĕн тăвас тетĕн, çапла тĕслĕх те пулнă...**

СЫВЛĂХ

# Аталан, пепке

**Çĕнĕ Шупашкарти медицина центрĕ "Хырăм пăрахмасăр 10 кун" акци пуçланă. Ăна çулсеренех Ачасене хÿтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кун тĕлне йĕркелеççĕ.**

Медицина ĕçченĕсем хĕрарăмсене хырăм пăрахнин сиенĕ çинчен каласа кăтартаççĕ. Пулас амăшĕ 10 кун хушшинче шухăшне улăштарасса шанаççĕ вĕсем. Унашкал тĕслĕх, чăн та, нумай.

Халĕ ятарлă эмелпе те хырăм пăрахма пулать. Малтан унашкал мелпе усă курман. Пĕрремĕш хут аборт тăвакансенчен чылайăшĕн операци хыççăн ача урăх тĕвĕленмен.

"Хырăм пăрахма тĕв тунă хĕрарăмпа калаçма психологсене, социаллă хÿтлĕх ĕçченĕсене те явăçтаратпăр. Витĕмĕ пур. Иртнĕ çулхипе танлаштарсанах аборт тăвакансен йышĕ чакрĕ. Хальхи медицина чĕре айĕнчи пепкене сыхласа хăварма май тупатех. Çуралман пепкерен хăтăлма палăртни – тĕрĕс пĕртенпĕр йышăну мар", – тет Çĕнĕ Шупашкарти медицина центрĕн тĕп тухтăрĕ Алексей Кизилов.

**Мария РОМАНСКАЯ.**

КУЛЬТУРА

# Кĕнеке тĕслĕ çуллахи кун

**Республикăри ача-пăча тата çамрăксен библиотекинче "Кĕнеке тĕслĕ çу" акци йĕркеленĕ. Çавна май специалистсем вулакансемпе пĕрле "Иртнине тĕпчемелли кун" ирттернĕ. Вĕсем истори вăрттăнлăхĕсене уçма тăрăшнă.**

Мероприятие хутшăнакансем Египетри пирамидăсем, фараонсем çинчен вуласа пĕлнĕ. Библиотека ĕçченĕсем ачасем валли конкурс та йĕркеленĕ. Кĕнекесем тĕрлĕ ыйтăва хуравлама, çавна май "фараон куçĕ" хаклă чула тупма пулăшнă. Тавçăрулăхшăн вĕсене тĕнче тĕлĕнтермĕшĕсем çинчен мультфильм кăтартнă.

Ачасем Авалхи Руç историне те кăсăкланса итленĕ. Халапсемпе истори документчĕсем тăрăх аталану çулне тишкернĕ. Акцие хутшăнакансем ÿкерчĕксене пăхаттирсемпе пĕрле çулçÿреве тухнă. Паллă çар пуçĕсемпе, ăстасемпе паллашнă. Унсăр пуçне пăхаттирсене тăшмана çĕнтерме пулăшнă.

Çамрăк тĕпчевçĕсен кунĕ "Хĕрпе каччă" вăййăпа вĕçленнĕ.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**

# Вĕçсе пырап конькипе...

## Çĕртме уйăхĕн 3-мĕшĕнче «Шупашкар-Арена» пăр керменĕ уçăлчĕ



Уява çĕршыври паллă спортсменсем килессе малтанах пĕлтернĕччĕ. Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев хăйĕн ĕç пӳлĕмĕнче Раççейри хоккей федерацийĕн президенчĕпе Владислав Третьякпа тĕл пулнă. Ĕçлĕ калаçăва республикăри физкультурăпа спорт министрĕ Сергей Мельников тата Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕ Алексей Ладыков та хутшăннă.

Республикăра çитĕнекен ăрăва спорта явăçтарас ыйтупа тимлĕ пулнине асăннă май Михаил Васильевич хăш-пĕр çитĕнӳсем çинчен уйрăммăн каласа хăварнă. Акă, 2014-2015 çулсенче Чăваш Ен хоккей командисем Раççей ăмăртăвĕнче аван кăтартусемпе палăрнă. "Сокол-98", "Сокол-2002" виççĕмĕш вырăнта пулнă. Хоккее, сăмах май, паян спорт 10 шкулĕнче 1000 ытла çын иленнĕ. Вĕсене спортăн çак енĕн вăрттăнлăхĕсене 27 тренер алла илме пулăшать.

Владислав Александровичпа Михаил Васильевич "Спортăн çуллахи бульварне" çитсе курчĕç.

Совет тапхăрĕнче çĕршыври нумай-нумай шкул ачишĕн чăн кумир пулса тăнă, халĕ те тĕрлĕ ăру çыннисен кăмăлне каякан паллă спортсмена курсанах шĕвĕрсем ăна хăйсен аллинчи буклет çине асăнмалăх алă пусса памашкăн тилмĕрчĕç.

Шкул ӳсĕмĕнчи арçын ачасем хĕрачасене Третьяк 1972 çулта Канадăпа выляна хыççăн чунĕнче мĕнле туйăмсем хуçаланни те, каярахри çулсенче хоккей енĕпе çак вăйлă çĕршыв командинче мĕншĕн выляма килĕшменни те, килĕнче мĕнле чĕрчунсем усрани те кăсăклантарчĕ. Хăйне пысăка хумасăр, çав вăхăтрах ачасене мăн çынсен шайне хурса тимлĕ калаçрĕ тĕнче чемпионĕ, Раççей Патшалăх Думин депутачĕ. Уçă калаçу хыççăн кăмăл тăвакансемпе асăнмалăх сăн ӳкерттерме те хаваспах килĕшрĕ.

### Сумлă спортсменсемпе куçа-куçăн

Çавăн пекех уява Олимп чемпионки Елена Бережная тата Олимп вăййисен призерĕ, тĕнче чемпионки Ирина Слуцкая килсе çитрĕç.

Тĕнче чемпионки Ирина Слуцкая хулари 3-мĕш шкулта çамрăк журналистсем валли пресс-конференци ирттерчĕ. Шупашкарти 27-мĕш шкулта РФ спортăн тава тивĕçлĕ мастерне Елена Бережнаяна ăшшăн кĕтсе илчĕç. Вăл унта хăйĕн 5 çулти хĕрĕпе Софиăпа пычĕ. Сăмах май, Олимп чемпионкин хĕрĕ те амăшĕ пекех пăр çинче эрешлесе ярăнать, спектакльсене хутшăнать. Тĕслĕхрен, вăл "Алиса в Стране Чудес" шоура пĕчĕк Алиса сăнарне калăплать. Шкул ачисем хăнасене хаваслă концертпа савăнтарчĕç, "Олимп квесчĕ" тупăшу тĕрĕслевĕ витĕр тухрĕç. Олимп чемпионкипе пĕрле Çĕнтерӳсен аллейине йывăç лартни вара вĕренекенсен асĕнче нумайлăха юлĕ.

### Пултарулăхпа спорт лапамĕ

Каçхи 4 сехетре Пăр керменĕ пултарулăхпа спорт лапамне çаврăнчĕ. Республикăри спорт федерацийĕн чи маттур хастарĕсем хăйсен ăсталăхĕпе паллаштарчĕç. Куракансем спорт аэробикин, тай боксĕн, гимнастикăн, каратэн, хĕвелтухăç кĕрешĕвĕсен тата спорт ытти тĕсĕн мелĕсене хаклама пултарчĕç.

Ачасене те интереслĕ пулчĕ. Тĕслĕхрен, аниматорсем пĕчĕк шăпăрлансене тĕрлĕ вăййа илĕртрĕç, клоунсем хăйнеевĕрлĕ шӳчĕсемпе култарчĕç. Кăпăк хăмпи тума вĕрентекен Кариб тинĕсĕн пиратне те ачасем çавăрса илнĕччĕ. Ушкăнăн-ушкăнăн пухăнса пластилинран, хутран тата ытти япаларан илемлĕ теттесем ăсталама, сăнарлă ӳкерчĕксем тума, асфальт çине пурăпа ӳкерме пултарчĕç. Ача-пăча ӳкерчĕкĕсен, кĕнекесемпе сăнӳкерчĕксен, алĕç ăстисен куравĕсем те çынсене хăйсен патне илĕртрĕç.

### Ĕмĕт пурнăçланчĕ

18 сехет çитеспе 7500 çынна вырнаçтаракан Пăр керменĕнче шоу пуçланчĕ. Арена çине çамрăк фигуристсем, хоккеиçăсем, шорт-трекерсем туха хăйсен пултарулăхне кăтартрĕç, уява эстрада коллективĕсемпе артистсем юрă-ташăпа илемлетрĕç.

Куракансене Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, легендарлă хоккеист Владислав Третьяк, Олимп вăййисен призерĕ Ирина Слуцкая, РФ хоккей федерацийĕн вице-президенчĕ Владимир Асеев, РФ Патшалăх Думин депутачĕ Алена Аршинова тата ыттисем саламларĕç.

– Чăваш Енре пурăнакансен ĕмĕчĕ тинех пурнăçланчĕ. Паянтан пуçласа çĕнĕ каток çине конькипе ярăнма юратакансем, хоккейпа туслисем, паллă спортсменсемпе ачасем тухĕç. Паллах, кермене кашнин çӳреме ирĕк пур. Кунта сывлăха çирĕплетме, ăсталăха туптама май чылай. Ку керментен паллă спортсменсемпе чемпионсем тухасса шанатăп. Юлашки çулсенче республикăра спорт объекчĕ нумай çĕклерĕмĕр. Кун пекки вара – пĕрремĕш хут. Хальхи вăхăтра кашни районта физкультурăпа спорт керменĕ ĕçлет, паян Шупашкарта çĕкленекен спорт центрĕсем те халăха савăнтарма тивĕç, – терĕ Михаил Васильевич.

Владислав Третьяк та Пăр керменĕ уçăлни хоккее, коньки тата пăр çинче эрешлесе ярăнакансен спортне тата вăйлăрах аталанма çул уçса парассине палăртрĕ. Каярах вара вăл журналистсене çывăх çулсенче "Шупашкар-Аренăра" Пĕтĕм тĕнчери хоккей турнирне ирттерессине пĕлтерчĕ. Ирина Слуцкаян сăмахĕсем те çунатлантарчĕç. Шупашкарта фигуристсен шкулне уçас тĕллевлĕ иккен паллă спортсменка.

Спорт уявĕ "Алиса в Стране Чудес на льду" шоупа вĕçленчĕ. Олимп вăййисен чемпионки Елена Бережная ертсе пыракан Санкт-Петербургри пăр театрĕн артисчĕсем тĕлĕнтерме юмах тĕнчине илсе кĕчĕç.

## «Чи йывăрри – хамăн ачашăн юлташ пуласси»

*Тĕнчен икĕ хутчен, Европăн çичĕ хутчен чемпионĕ, Олимп вăййисен кĕмĕл /2002/ тата бронза /2006/ призерĕ Ирина Слуцкая пысăк мероприяти пуçланиччен Чăваш наци телерадиокомпанине çитрĕ, «Тăван радиопа» тӳрĕ эфира тухрĕ. Кунта ăна ытти МИХсен ĕçченĕсем те кĕтсе илчĕç. Çавăнпах интервьюн хăш-пĕр саманчĕсемпе сире те паллаштаратпăр.*

**– Шупашкарта мĕн те пулин курма ĕлкĕртĕр-и?**

– Хальлĕхе нимех те калама пултараймастăп-ха. Сирĕн хула питĕ илемлĕ терĕç. Унпа паллашатăпах. Тепре килсен кăмăлтуйăма палăртăп.

**– Тĕллеве пурнăçлас тесен çынра чемпионăн хăш енĕ пулмалла?**

– Чемпион тени анлă пĕлтерĕшлĕ. Туртăнаççĕ пулин те чылайăшĕ ку ята илтеймест. Пурнăçра вара çирĕп тĕллевлĕ, малтуртăмлă, ĕçчен пулмалла. Алă усмасăр малалла талпăнма пĕлмелле.

**– 4 çултах ярăнма пуçланă эсир. Чемпион пуласси пирки ĕмĕтленнĕ-и?**

– Эпĕ нихăçан та пĕрремĕш пуласси, чемпион ята илтесси пирки шухăшламан. «Ылтăн илмелле» текен тĕллев те лартман. Мĕн пултарнине кăтартасси – çакă маншăн яланах тĕп вырăнта. Ача чухне конькипе илемлĕ ярăнма вĕренес килетчĕ. Темшĕн Копенгагена каяс килетчĕ. Аттепе анне яланах: «Лайăх ярăн – вара каятăн», – тетчĕç. Эпĕ Совет Союзĕнче ӳснĕскер-çке – ун чухне вара ют çĕршыва каясси сайра пулăмччĕ. Кайран, ăмăртусене тухса çӳреме тытăнсан, унта та çитрĕм.

**– Пĕрремĕш çитĕнӳсем йывăррăн килчĕç-и?**

– Çĕнтерӳ нихăçан та çăмăл пулмасть. Юниорсен тĕнче чемпионатĕнче палăрни, паллах, тĕрев пачĕ. Малалла каймала, çитĕнӳ тума вăй çитнине ăнланма пулăшрĕ. Çĕнтерӳ ырă туйăмсем парнелет.

**– Сирĕншĕн телей мĕн вăл?**

– Маншăн вăл – килте йĕркеллĕ пулни. Пурте чĕрĕсывă, кашни савăнăçлă чухне, йывăрлăхсем аптратмасан – çакă телей пулĕ. Эпĕ – анне. Çавăнпа та маншăн ачасем сикни-выляни, алхасни те – телей.

**– Ачасене кĕрешӳçĕ пулма вĕрентетĕр-и?**

– Паллах. Хĕрпе çăмăлрах. Арçын ачасемпе йывăртарах. Ывăл ӳстерекенсем мана ăнланаççĕ пулĕ тетĕп. Уйрăмах харсăр та йăррисемпе çăмăл мар. Вĕсем хăйсем çитĕнӳ тăвайманшăн та, палăртни пурнăçланманшăн та пăшăрханаççĕ. Çавăнпах нимĕн те çăмăллăн килменнине, тĕллев патне çитме вăй нумай хумаллине, тăрăшмаллине ăнлантармалла. Икĕ ачана та çакăн пек шăнăрпа ӳстерме тăрăшатăп.

**– Лайăх анне пулма йывăр-и?**

– «Лайăх анне» тенине те кашни хăйне май ăнланать. Паллах, тăрăшатăп. Чи йывăрри – хамăн ачашăн юлташ пулса тăрасси. Асли часах 8 тултарать, кĕçĕнни – пиллĕкре. Вĕсен, уйрăмах аслин, хăйсен пурнăçĕ пуçланать темелле. Халĕ эпир каçхине шăкăл-шăкăл калаçмалли тапхăра çитнĕ: шухăш-кăмăлĕпе кăсăкланмалла, ыратăвне итлемелле, пăтăрмахсене сирме пулăшмалла. Çавăнпах вăл мĕн каланине пĕтĕмпех итлеме тăрăшатăп. «Темех мар» тесе хураваламастăп. Пирĕншĕн пĕчĕк туйăнакан ыйту та халĕ уншăн пысăк-çке. Сăмахран, машина вансан та: «Каях, кайран тӳрлетĕпĕр» теместĕп. Иккĕн отверткăпа чакаланатпăр.

**– Пултарулăхăр тĕрлĕ енлĕ: актер та, юрлатăр та...**

– Манăн икĕ юрă çеç. Ку вăл хăтланса пăхни пулчĕ-тĕр. Актер тенĕрен, академире вĕреннĕ эпĕ. Анчах ку мана çывăх маррине ăнлантăм. Çĕннине сĕнеççĕ те – майпа усă куратăп çеç. Пурнăçра эпĕ хăйне майлă экстремал. Мĕн туса пăхманши? Самолетпа вĕçнĕ, юрланă, ташланă, сцена çинче ĕçленĕ, ярăннă... Енчен те халĕ те мĕн те пулин кăсăкли сĕнсен – хирĕçлеместĕп.

Тĕрлĕ секци, клуб нумай халĕ. Паянхи ăрăва кăштах ăмсанатăп та. Эпĕ 6 градус ăшăра тикĕс мар пăр çинче ярăнма вĕреннĕ. Тапаланнă çав...

**– Тен, паянхи çитĕнӳсене тума çакă пулăшнă та?**

– Ăсталăха туптама майсем пурри çăмăллăх кӳретех, хавхалану хушатех.

**– Çынсене мĕн сунăттăр?**

– Чи малтанах – сывлăх. Спортсменсене – чăтăмлăхпа пултарулăх. Унпа пĕрлех – ăнăçу та. Паллах, юрату. Ыранхи куна шанса, хавхаланупа кĕтмелле пултăр.



Ирина ПУШКИНА, Андрей МИХАЙЛОВ, Татьяна НАУМОВА.

АНАТАЛЛА-ТĂВАЛЛА

# Ирĕклĕхре, шур хурăнсен хушшинче...

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

1962 çултанпа Аслă Кăршка Çĕрпӳ районĕнчи Кăнар ял тăрăхне кĕрет. Аслă çултан тата центртан ытла аякра пулнипе çыхăннă-ши, кунти халăх майĕпен Кăнара куçса кайнă. Кăршкасене ĕмĕр тăршшĕпех тăван тăрăхра темĕн тивĕçтереймен пек туйăнать. Ырăнти халăх тăрук чакнă, унтан татах йышланнă, кайран каллех сахалланса юлнă. Çапла майĕпен ял сӳннĕ. Йывăçпа, вĕлтĕрен-пиçенпе хупланнă кивĕ, çĕр çумне лăпчăннă хуралтăсем çеç юлнă вĕсем хыççăн. Анчах та кунти вырăна паян та килĕштерекенсем пур. Ан тив, виç-тăват килĕллĕ çеç пултăр, çапах Аслă Кăршка çĕнĕ ĕмĕрте те пурăнать-ха.

## Сывă пурнăç йĕркишĕн

Яла çитсен чи малтан Петрпа Галина Ефимовсем патĕнче чарăнтăмăр. Вĕсен умĕнче тин çеç çулнă тутлă шăршăллă ем-ешĕл курăк выртатчĕ. Йăран хушшинче тăрмашакан кил хуçи ĕçне пăрахсах витĕр курăнакан хапха алăкĕ умне чупса çитрĕ. Хаçатран иккенне пĕлсен ăшă та ырă куçлăскер тӳрех кил хушшинелле иртме сĕнчĕ. Часах мăшăрĕпе пĕчĕк хĕрĕ те пахчана тухрĕç.

Ефимовсем кунта 2008 çулта Шупашкартан куçса килнĕ. 2006 çулта тус-юлташĕпе пĕрле пысăках мар, тăпăл-тăпăл çурт хăпартнă. Петр Аслă Кăршкана киличчен программистра тăрăшнă. Хула шăв-шавĕ йăлăхтарса çитерни ирĕклĕхе туртăнма хистенĕши е экологи енчен таса вырăн илĕртнĕ-ши, апла-и, капла-и, телейпе çиçекен сăн-питлĕскерсене курсан вĕсем хăйсен вырăнне тупнă пек туйăнчĕ.

Кунти кил хуçалăхĕсем йăлтах урăхла. Йĕри-тавра курăк, çаран, темĕн тĕрлĕ йывăç ӳсет. Выльăх-чĕрлĕх усраманран сарай тавраш та çук. Ирĕклĕхре кашниех хăйсене кирлĕ пек пурăнать. Петр пахчине хурăн, хыр нумай лартнă. Çав вăхăтрах хăйсем тĕллĕн шăтнă йывăç та чылай. Хурăнĕсем те урăх йышши пек туйăнчĕç, вĕсен тунисем темшĕн тата шурăрах. Çĕмĕрт те, чие те, улмуççи те, хăмла çырли те сад туллиех. Галинăпа пĕчĕк хĕрĕ Дарина мана хăйсен юратнă уçланкине кайса кăтартрĕç. Унта вĕсем курăка таптамасăр ятарлă сукмакпа кăна çӳреççĕ. «Ку пирĕн чи кăмăлланă вырăн. Пĕчĕк хĕрĕмпе çак уçланкăра канма юрататпăр, юмах кĕнекисем вулатпăр, саспаллисем вĕренетпĕр», – паллаштарать Галина. Йывăçсен айĕнче сулхăнрах, кăтра хурăнсен витĕмне пула хĕвелĕ те çав териех пĕçертмест.

Кил хуçи çĕрпе пĕлсе усă курать. Пахчаçимĕçе ятарласа хатĕрленĕ паха тăпра çинче çитĕнтерет, çĕре нимĕнле им-çам та сапмасть. Хулара çитĕннĕ пулин те пуртă-пăчкă тытма та, пахча ĕçĕсене те аван пĕлет Петр. Беседка валли те вырăн хатĕрлесе хунă. Васкамасăр, пурне те килĕшмелле ăсталасшăн ăна. Çимĕк уявĕ пулнăран утта çулма ĕлкĕрейменччĕ-ха Ефимовсем. Ăна çĕртсе кашни çулах пахчари тăпрана пулăхлатаççĕ.

Пĕр гектар çĕр çинче тĕрлĕ йывăçсăр пуçне çĕрулми, кишĕр-купăста, хăярпа помидор, дыня, пăрçапа шалча пăрçи çитĕнет. Çĕр çырли хăй сахал мар лаптăк йышăнать. Ем-ешĕл ыраш варкăш çилпе хитрен чӳхенсе ларать. Сăмах май, Ефимовсем лавккари çăкăрбатона çимеççĕ. Апла ку тыр-пула та ахальтен акман иккен Петр. Тулăпа ыраша килти арманпа авăртса кăмакара кулач пĕçереççĕ. Сывлăхшăн сиенлĕ тесе чустана çĕпрепе хăпартмаççĕ. Кил хуçи арăмĕн хăйĕн ятарлă рецепт пур. Шăтарнă тулла аш арманĕпе авăртнă хыççăн сахăр-тăвар хушмасăрах чуста хурать Галина. «Паллах, çĕпрепе лайăхрах хăпарать пулĕ, анчах та кунашкалли сывлăхшăн усăллăрах, çав вăхăтрах – тутлă та. Сахăр вырăнне пыл çиетпĕр эпир. Халь хамăрăн та хурт-хăмăр пур», – каласа кăтартать кил хуçи арăмĕ. Çĕрулмие те кун таврăнсан, Çĕнĕ çул хыççăн рациона ытлах кĕртмеççĕ. Тĕрлĕ пăтă вара сĕтел çинчен нихăçан та татăлмасть. Йĕтĕн çăвĕпе çиеççĕ ăна. Пахчари сиплĕ тĕрлĕ курăкпа панулмирен хатĕрленĕ нимĕр /смузи/ – вĕсен çуллахи чи юратнă апачĕ.

Хушăран сĕт ĕçеççĕ пулсан ашкакай пирки вара пачах та аса илмеççĕ. Апат пĕçернĕ чухне тăвара ячĕшĕн çеç хушаççĕ. Чирлесессĕн пахчари эмел курăкĕсемпе сипленеççĕ.

Пĕчĕк Дарина сывлăхшăн сиенлĕ чипспа сухарие, тĕрлĕ чăмлакпа шăккалатсене нихăçан та активмен тесен тĕрĕсрех те пулĕ. Кукамăшĕпе кукашшĕ патне кайсан çеç пылак çимĕçпе хăналанма пултараççĕ. Лавккана кĕрсен те ытти ача пек нăйкăшса ашшĕ-амăшне тĕрлĕ çимĕç ыйтса йăлăхтармасть. Вăл унашкал апата хăнăхман. «Какай вырăнне пăрçа, шалча пăрçи çиме тăрăшатпăр. Унта белок çителĕклех», – каласа кăтартаççĕ Петрпа Галина.

Интернетпа усă кураççĕ, анчах та телевизорпа туслах мар Ефимовсем. Пĕчĕк Даринăна совет саманинчи ырра вĕрентекен юмахсемпе мультфильмсене çеç кăтартаççĕ. «Усалли, япăххи нумай, вĕсем ачан психикине сиенлеççĕ, шухăшлавне пăсаççĕ», – теççĕ пĕчĕк хĕрĕн сывлăхне мала хуракан ашшĕпе амăшĕ.

Ниçта васкамасăр, ывăнмасăр, тепĕр майлă, чун валли ĕçлеççĕ вĕсем хура çĕр çинче. Касăва каймалла, ĕне сумалла, сыснана апатлантармалла тесси те çук. Пахчари кашни йывăç-тĕм хаклă вĕсемшĕн. Иртнĕ çулхи пăрлă çумăр кунта та пăртак шар кăтартнă. Хитре хурăнсене çил-тăвăл пĕр шелсĕр хуçса антарнă. Çĕр çине ӳкнĕ пысăк турата шелленипе хальлĕхе касас темен. «Чĕрĕ-çке вăл, ав халĕ те унтан-кунтан çулçă кăларнă, шереписем мĕнешкел хитре», – черчен туратсене аллипе ачашлать Галина.

Пĕр-пĕрне чунран юратнине çынран пытарма çук пуль çав. Куççем ун пек чухне суйма памаççĕ. Килĕшӳпе юратура, татулăхра пурăнаççĕ Петрпа Галина Ефимовсем. Пахчинче вĕсен кăçал пĕрремĕш хут пылак палан çурăлнă. Çапла-çапла, пылакки, йӳççи мар. Шап-шур чечекпе витĕннĕскер катаранах хăй патне илĕртет. «Çемье çирĕплĕхĕ хĕрарăмран нумай килет», – юратнă мăшăрĕ çинчен куçне илеймест ăшă чунлă Петр.

## Хăйне сăвар текен чăваш

Аслă Кăршкара пурăнакан Радомир /Александр Попов/ хăй пирки «сăвар» тет. Вăл кунта Шупашкартан куçса килнĕ. Хăй каланă тăрăх, Тутарстан тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ. Радомир хĕрес çакса çӳренине те юратмасть. Сăвар ячĕсене хуманнишĕн те ӳпкелешет. Чăваш тĕрринче хĕрес пуррине те сивлет. «Чăваш тетĕр хăвăра, эсир сăварсем пурте», – аллипе сулсах вăрçма тытăнчĕ пире Радомир. Хăйĕн тĕнчинче пурăнать вăл, çавăнпа та ăна ăнланса çитме те йывăртарах. Апла-и, капла-и, алли вара чăннипех те ылтăн. Хапхи умĕнчи пусса та, саксемпе юрату йывăçĕсене те хăй ăсталанă Радомир. Ку тăрăхалла мăшăрпа килес пулсан çемьере килĕшӳ, татулăх хуçалантăр тесе вăл касса кăларнă йывăç çумне тутăр е хăю тавраш çыхса хăвармалла-мĕн. Аслă Çĕнтерӳ 70 çул тултарнă май Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче юн тăкнă салтака халалласа хăйĕн килĕ умĕнче палăк уçнă Радомир. Ăна йывăçран касса кăларнă. «Çав палăка уçма никам та пулăшмарĕ. Чĕннĕ хăнасем çу уйăхĕн 7-мĕшĕнче пирĕн пата килес темерĕç», – хăй питĕ кăмăлсăрланнине пĕлтерчĕ арçын. Вăл каскалама, ӳкерме ниçта та вĕренмен. Хĕç тимĕр лаççи, тĕрлĕ юпа таврашĕ пĕрпĕр маçтăрăннинчен нимпе те кая мар. Çĕнтерӳ палăкĕ те ăнăçлă пулса тухнă. «Сăварсем вилсен тĕнче те пĕтет. Хальлĕхе çавсем çинче кăна тытăнса тăрать», – терĕ те Радомир, хапха алăкне çиллессĕн шаплаттарса хупрĕ. Уява чĕннĕ журналистсем килейменнишĕн кӳреннĕ вăл.

## «Çутçанталăк илемĕпе киленсе çитет»

Радомирпа кӳршĕллĕ пурăнакан Степановсем Çĕрпӳ тăрăхне Екатеринбургран куçса килнĕ. Вĕсен виçĕ ача. Аринăпа Радомир виçĕ çухрăмра вырнаçнă Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шĕнерпуç шкулне çӳреççĕ. «Хĕлле валли сунарçă йĕлтĕрĕ туянса патăмăр, юлашкинчен вăл та хуçăлса ӳкрĕ. Шыв-шур типсен Арина велосипедпа çӳрерĕ. Кăçал çуркунне урнă тилĕ нумайччĕ, ачасене шкула яма сехре хăпатчĕ. Пылчăкра ниепле те çитсе пĕтме çук Шĕнерпуçне, çулĕ çăрăлнă май атăпушмак хывăнса юлать», – чунне уçать кил хуçи арăмĕ Авелина. Часах ултă çулти Ладăн та пĕрремĕш класа кайма вăхăт çитет. Çавăнпа та вĕсем Вăрнар тăрăхĕнчи Упнере куçма тĕв тунă. Мăшăрĕ Александр çав ялта çуралса ӳснĕ-мĕн.

«Сана пирĕн пата паян Турă ярса пачĕ пуль», – çапла каласа кĕтсе илчĕ кăмăлĕ хуçăлнă Авелина. Вĕренӳ çулĕ вĕçленнĕ хыççăн Шĕнерпуç шкулĕнче пăтăрмах пулса иртнĕ-мĕн. Тăхăр класс пĕтернĕ Арина пĕчĕк шăллĕн кĕнекисене пуçламăш класс вĕрентекенне алăран тыттарса хăварнă. Вĕренӳ кĕнекисем таçта çухалнă. Çавăн пиркиех Степановсене пĕрремĕш класс пĕтернĕ Радомир документчĕсене тавăрса памаççĕ-мĕн. Телее, çак кунсенче кĕнекесем шкултах тупăннă. Учительсем мĕншĕн тӳрех шкул ачине айăплама тăрăшаççĕ-ши? Кĕнекесем вĕрентекенсен тимсĕрлĕхне пула çухалнă-çке.

Степановсен 1,5 гектар çĕрĕ çинче – темиçе теплица. Картишĕнче çăл чавнă. Чӳхенсе илес тесе шăрăх кунсенче мунча час-часах хутаççĕ. «Ял пурнăçĕ мĕне кăна вĕрентмест-ши? Хулара çитĕннĕ май эпĕ малтан нимех те ĕçлеме пĕлмен. Аслă Кăршкара пурăнса ирĕклĕхе тата çĕре юратма хăнăхрăмăр. Çутçанталăк илемĕпе киленсе çитет пуль. Тĕлĕнмелле лайăх кунта, анчах та çывăхра шкул çукран куçса кайма тивет», – каласа кăтартать Авелина.

Кăршкара пурăнакансен кашнин – хăйĕн тĕнчи. Чăннипех те, вĕçĕхĕррисĕр ирĕклĕх. Çĕрĕ те темĕн чухлех. Вутти-шанки те, утти те çителĕклĕ. Кăмпа-çырла, мăйăр шыраса аякка каймалла мар. Урама тух та пуçтар. Пахчари çерем çинче те туллиех. Çăлкуç шывĕ, шур хурăнсемпе çӳлелле кармашакан хырсен шăрши хăйсен сиплĕхĕпе вăйне парса тăраççĕ пулĕ кунти çăтмахра тĕпленнисене.

**Елена АТАМАНОВА.**
Автор сăнӳкерчĕкĕсем.





• РАДОМИР ĔÇĔСЕМ.





АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

### Кăлпассипе, сырпа



**250 грамм тĕтĕмленĕ кăлпасси, 100 грамм хура слива, консервланă 1 банка симĕс пăрçа, 100 грамм хытă сыр, 1 шăл ыхра, майонез, укроп кирлĕ.**

Кăлпассипе сыра пĕрчĕлесе касмалла. Ăшă шывра шÿтернĕ хура сливăна вĕттĕн турамалла. Укропа, ыхрана вĕтетмелле. Салатри çимĕçсене майонезпа пăтратмалла.

### Пĕверпе, çăмартапа

**500 грамм чăх пĕверĕ, 4 кишĕр, 4 çăмарта, пуçлă 2 сухан, консервланă 4 апат кашăкĕ симĕс пăрçа, 1 ывăç çу çырли, тип çу кирлĕ.**

Соус валли 2 панулми, 100 миллилитр тип çу, 2 чей кашăкĕ сар пăрăç, 1 чей кашăкĕ панулми уксусĕ, 1 чей кашăкĕ сахăр, 1 чей кашăкĕ тăвар хатĕрлемелле.

Чăх пĕверне, кишĕре, çăмартана пĕçермелле.

Хуппинчен, вăрринчен тасатнă панулмие вĕттĕн касмалла. Уксуспа, сахăрпа пăтратнă панулмие пăшăхламалла. Сивĕнсен ăна блендерпа вĕтетмелле, тăвар, сар пăрăç, тип çу хушмалла.

Çурма çаврашкан туранă сухана тип çупа ăшаламалла.

Пĕверпе кишĕре, çăмарта саррипе шуррине уйрăммăн теркăламалла.

Салата сийлесе /пĕвер – кишĕр – çăмарта шурри – сухан – симĕс сухан – пĕвер/ хумалла. Кашни сийе панулми соусĕ сĕрмелле. Çиелтен çăмарта сарри сапмалла.

Çу çырлине çаврашкан касмалла. Салата çу çырлипе тата симĕс пăрçапа илемлетмелле.

### Пăрçа пăтти

**1 стакан пăрçа, 1 кишĕр, 1 пылак пăрăç, пуçлă 1 сухан, 100 миллилитр шĕвĕ хăйма, тăвар, пăрăç, тип çу кирлĕ.**

Шÿтернĕ пăрçана 2 стакан шывпа пĕçермелле.

Тăваткалласа туранă суханпа теркăланă кишĕре, пĕрчĕлесе каснă тутлă пăрăçа тип çупа ăшаламалла.

Пиçнĕ пăрçана шĕвĕ хăйма хушса тÿмелле. Пăтта ăшаланă пахчаçимĕçпе пăтратмалла. Тепĕр хут вăйсăр çулăм çине лартмалла. Пăрçа пăтти какайпа уйрăмах тутлă.

### Чăх катлечĕ

**800 грамм чăх фаршĕ, 2 кишĕр, 200 грамм сыр, 2 помидор, 1 çăмарта, 50 грамм крахмал, майонез, тăвар, пăрăç, тип çу кирлĕ.**

Фарша çăмартапа, крахмалпа, тăварпа, пăрăçпа пăтратмалла. Çак хутăша 30 минутлăха сивĕтмĕше хумалла.

Кишĕре, сыра теркăламалла. Помидора çаврашкан касмалла. Çатма тĕпне фольга сармалла, тип çу сĕрмелле. Йĕпе алăпа катлет туса хумалла. Кашнин çине кишĕр, помидор хумалла, çиелтен майонез сĕрмелле. Катлетсене 40 минутлăха духовкăна лартмалла. Сыр сапса тепĕр 10 минут пĕçермелле.

Чăх катлетне çĕрулми нимĕрĕпе, рис, хуратул пăттипе пĕрле хурса памалла.

### Хăпарту

**200 грамм тăпăрч, 100 грамм услам çу, 2 çăмарта, 100 грамм исĕм, 150 грамм çăнăх, 3 апат кашăкĕ манна кĕрпи, 3 апат кашăкĕ сахăр, 2 апат кашăкĕ тип çу, 0,5 чей кашăкĕ апат соди, 1 лимон, ванилин, тăвар, 40 грамм кокос хăрпăкĕ кирлĕ.**

Вилкăпа çемçетнĕ тăпăрча çăмартапа, кокос хăрпăкĕпе, ванилинпа, тăварпа пăтратмалла. Çакăнтах исĕм, сахăр, хăйма, тип çу, манна кĕрпи хушмалла.

Штрейзель валли теркăланă услам çăва çăнăхпа пăтратмалла.

Штрейзель çуррине çатмана хумалла. Ăна тăпăрч хутăшĕпе витмелле. Çиелтен штрейзель сапмалла. Хăпартăва духовкăра 40 минут пĕçермелле. Сĕтел çине лартиччен кокос хăрпăкĕпе илемлетмелле.

### Консерва кукăлĕ

**3-4 çĕрулми, 1-2 банка пулă консерви, пуçлă 1 сухан, тăвар кирлĕ.**

Чуста çăрма 150 грамм хăйма, 2 апат кашăкĕ майонез, 2 çăмарта, 1 чей кашăкĕ апат соди, 100 грамм çăнăх, тăвар хатĕрлемелле.

Хăймана майонезпа, çăмартапа, тăварпа, çăнăхпа, апат содипе пăтратса чуста çăрмалла.

Пулă консервне вилкăпа çемçетмелле. Çĕрулмие теркăламалла. Сухана вĕттĕн турамалла. Тип çу сĕрнĕ çатмана çĕрулми хумалла. Ăна консервăпа, суханпа витмелле. Çиелтен шĕвĕ чуста ямалла. Кукăле 50 минут пĕçермелле.

ПАХЧАÇĂ КĔТЕСĔ

# Яппун кăшманĕ



**Дайкон питĕ сиплĕ теççĕ. Вăл пÿрери чулсене ирĕлтерме пулăшать-мĕн. Ăна хăçан, мĕнле акса ÿстермелле-ши? Халь кая юлмастăп-ши?**

**Валентина СТЕПАНОВА.**
Шупашкар районĕ.

Дайкон кĕске куна юратакан ÿсен-тăран, çавăнпа та ăна çĕртме-утă уйăхĕсенче акаççĕ. Вăрри шăп та лăп редисăнни пекех. Ăна йÿç кăшмана çитĕнтерсе ÿстернĕ пекех пăхса тăмалла. Тепĕр майлă ăна яппунсен кăшманĕ тесе калаççĕ, анчах та йÿç кăшман пек сар пăрăç çăвĕпе пуян мар вăл. Çавăнпа та ăна чĕрĕлле çиме те, тăварлама та, маринадлама та май пур. Тымар çимĕçе пĕçерсе çиме те юрать.

Çак кăшман кали тата кальци тăварĕсемпе пуян. Унпа пĕрлех унра этем организмĕшĕн питĕ усăллă тĕрлĕ витамин, пектин еверлĕ япаласем, тĕрлĕ фермент пур. Çакнашкал хими хутăшĕсемпе пуян пулнăран дайкон пÿрери чулсене ирĕлтерме пулăшать. Çавăн пекех пĕвере тата пÿрене сиенлĕ хутăшсенчен тасатать. Шăп çавăнпа ĕнтĕ унпа тĕрлĕ чир-чĕртен сыхланас тĕлĕшпе анлă усă кураççĕ.

Анчах çакна астумалла: хырăмлăх шыççипе тата вуник пумăклă пыршăлăх чирĕпе аптракансемшĕн дайкон сиенлĕ пулма пултарать.

Дайкон сĕтеклĕ, шурă тĕслĕ, формипе кишĕр еверлĕ. Çимĕçĕн çемçе пайĕ ÿснĕçемĕн хытмасть. Йÿçеклĕхĕ чакать, анчах С витамин шайĕ ÿсет. Кунсăр пуçне вăл экологи енчен таса çимĕç.

Тымар çимĕçĕ пысăк пулин те, дайкон йывăр тата тăмлă тăпрара лайăх ÿсет, мĕншĕн тесен унăн çимĕçĕн 2/3 пайĕ çĕр çийĕнче çитĕнет. Ăна пухнă чухне çеçкине тÿрех касмалла, тымарне тĕкĕнмелле мар. Тăм ÿкнипе сиенленмесен е сăтăрçăсем /купăста шăни/ тапăнмасан çимĕç лайăх упранать.

* * *

Шăтса тухиччен кишĕре тăтăш шăвармалла. Йăран симĕсленме пуçласан вара, шăрăх тăмасть пулсан, 12-15 кун шыв сапмасан та юрать. Çакă тымара вăй илме май парать.

Укропа хĕвел çине лартмалла. Сулхăнта унăн шăрши пĕтет. Ку ÿсен-тăрана кĕлпе тата извеçпе апатлантармалла мар.

Юнашар йăран çине сар пăрăç аксан пăрçа тухăçĕ икĕ хут ÿсет.

Лайăх çитĕнеймен кишĕре тăвар шывĕпе /10 литр шыв пуçне 1 апат кашăкĕ тăвар/ шăварма юрать.

# Июнь уйăхĕнче мĕн кĕтет?

**СУРĂХСЕМШĔН** ку уйăх – лайăххисен йышĕнчен мар. Сире ăмсанакансем тупăнĕç, элек сарма хăтланĕç. Çын мĕн каланине ан итлĕр, хăвăр мĕн шухăшланине пурнăçлăр. Ăнăçу – сирĕн енче.

Юратуллă хутшăнусене илес пулсан, уйăх пуçламăшĕнче савнă çынпа хирĕçес хăрушлăх пур. Хаклă хутшăнăва татас мар тесен кăмăла кăштах хытармалла пулĕ. Малтанхи хутшăнусене çĕнĕ варкăш кĕртме киленĕç тупни пулăшĕ. Пĕрле усăлса çÿрени те паха.

Çĕртме – çĕнĕ ĕçе куçас шухăшлисемшĕн ăнăçлă тапхăр. Командировкăна пустарăнакансем те çула çăмăллăнах тухма пултараççĕ.

**ВĂКĂРСЕНЕ** шăпа пÿрессе кĕтни усă кÿмĕ. Кăмăл-туйăм хуçăлнăранах шăнаран слон тума ан хăтланăр. Çăлтăрсем лăпланма сĕнеççĕ, мĕн пулса иртнине пурне те чĕре çывăхне ан илĕр, уçă сывлăшра ытларах пулма тăрăшăр.

Вăкăрсен халĕ ĕçре те, хутшăнусенче те туса ĕлкĕрмелли нумай. Çав вăхăтрах çывăх çыннăрсем хăйсен ыйтăвĕсене сирĕн çине куçарасшăн.

Пĕтĕм ĕçе пурнăçласан çеç юратуллă хутшăнура ырă улшăнусем пулса иртĕç.

**ЙĔКĔРЕШСЕН** ĕçĕсем хăйсен еккипе аванах чупĕç. Çавăнпах канасси пирки те шухăшлама юрать. Çăлтăрсем ку уйăхра çĕнĕ ĕçе кÿлĕнме мар, пуçăннисене вĕçлеме сĕнеççĕ. Хăвăртан çÿллĕрех сикме ан хăтланăр.

Юратуллă хутшăнура та пĕтĕмпех йĕркеллĕ. Сирĕн çывăх çыннăрсене парнесемпе савăнтарас килĕ. Тахçанах курман тусăрсемпе курнăçма та май пулĕ.

Кил-çурта тирпейлес-çĕнетес кăмăл та çуралĕ Йĕкĕрешсен. Тĕплĕ юсав ĕçне каярах пуçăнмалла-тăр.

**РАКСЕН** кăмăл пусăрăнчăккинчен, ĕç кайманнинчен тĕлĕнме кирлĕ мар. Хăть те мĕнле пулсан та çак тапхăрта хăвăра алăра тытма тăрăшăр. Кăмăла уçма юлташăрсемпе, çывăх çыннăрсемпе курса калаçни, тавралăха улшăнусем кĕртни пулăшĕ. Çăлтăрсем сире тăшман шырама сĕнмеççĕ, унсăрăн хирĕç-тăру халтан ярĕ.

Пурнăçра та курăмлă улшăнусем пулĕç. Çирĕп йышăну тумалла чухне самантлăх кăмăлăра ан парăнăр, пуçăрпа шухăшлăр. Ытлашши кĕвĕçни те вырăнсăр. Çемьеллисен мăшăрне урăххи çумне хушса вăй-хал пĕтермелле мар, ачисене тимлĕх ытларах уйăрмалла. Мăшăрланманнисене пĕрпĕринчен кăштах канни те усă кÿрĕ.

**АРĂСЛАНСЕН** ку уйăхра икĕ мулкача пĕр харăс хăваламалла мар. Тимлĕхĕре пысăкрах пĕр ĕçе çеç уйăрăр. Пусăрусем пурте ăнăçлă иртни çеç мар, çывăх çынсемпе тусăрсем хастар пулăшни те савăнтарĕ. Енчен те пурнăçăра таса хутран пуçлас кăмăл пур тăк – шăпах ăнăçлă вăхăт. Сирĕнте халĕ вăй-хал тапать.

Çăлтăрсем çемьери хутшăнусене çирĕплетме сĕнеççĕ, çавăнпах кил-çурта хăтлăлатăр. Çывăх çынсемпе похода кайни, уçăлма тухни те ырă витĕм кÿрĕ.

Ĕçре пĕтĕмпех тикĕс пырать. Явапляхран ан шикленĕр – тăрăшулăхăрпа ĕçченлĕхĕр сире пулăшаççĕх.

**ХĔРСЕН** хăйсен професси анине анлăлатма май пулĕ. Усăллă та ăнăçлă паллашу та сахал мар. Эсир халĕ хăвăра нихçанхинчен те çирĕпрех туятăр. Çапла пулма çывăх юлташсем алă тăсни, сирĕн шухăшăрпа килĕшекенсем пурри те пулăшать. Пурнăçăра лайăх еннелле улăштарма та ăнăçлă тапхăр халĕ. Тĕллевĕр патне çитес тесен никама та пăхăнманни, çирĕп шухăш-кăмăлли кирлĕ. Çакăнпа сирĕн ĕçтешĕрсем кăштах кăмăлсăрланĕç те паллах. Элек сарма хăтланакан та, ура хурас текен те тупăнĕ. Анчах çын сăмахне ан итлĕр.

Çемье телейĕшĕн тăрăшма пĕлнĕренех тĕрлĕ йывăрлăха та çăмăллăнах парăнтаратăр.

**ТАРАСАСЕН** пысăк пĕр-пĕр ĕçе пуçăнмалла, анчах пĕтĕмпех тĕплĕ виçмелле.

Килти лару-тăру çивĕчленес хăрушлăх пур. Çакă татса памалли ыйтусем пуçтарăннипе, ĕçре тавлашуллă самантсем сиксе тухнипе, ывăннипе те çыхăнма пултарать. Çаксене пĕтĕмпех ирттерес тесен кăмăла уçмалла.

Çăлтăрсем савнă çынна юрату, ăшăлăхпа çепĕçлĕх парнелеме сĕнеççĕ.

Пуçлăхпа хирĕçес мар тесен хăвăр тĕрĕссине туйсан та ан чĕнĕр. Ÿкĕте кĕртеймĕр, хутшăнăва çеç пăсатăр.

**СКОРПИОНСЕН** те пуçланă ĕçĕсене вĕçлемелле. Хăть те мĕнле лару-тăрура та компромисс тупма пĕлни кирлĕ халĕ.

Юратуллă хутшăнусенче те асăрханулла пулăр, шухăшламасăр пĕр утăм та ан тăвăр. Сирĕн туйăмсем чăннипех те таса та ырă пулнине ĕнентерме те вăй хума тивĕ. Малашнехи пурнăça та çăлтăрсем савнипе, тăвансемпе сÿтсе явма сĕнеççĕ.

Пĕр вăхăта тĕрлĕ ув пирки манса ĕçе пуçни те пăсăк пулмĕ. Професси ăсталăхне, ăнăçăва ÿстерме пулăшĕ ку.

**УХĂÇĂСЕМ** çынсене витĕр курма çеç мар, вĕсемпе ăнăçлă усă курма та вĕренĕç. Мĕн пулса иртнине хăвăрт ăнкарма тата тĕрĕс хак пама пултарнипе çыхăннă ку.

Тин паллашнă çынсемпе тимлĕрех пулмалла: вĕсен йышĕнче сирĕн çĕнĕ савни те пур-тăр. Юратнă çынпа хирĕçнисен ку уйăхра хутшăнусене йĕркене кĕртме май пулĕ – тăрăшмалла çеç.

**ТУ КАЧАКИСЕМ** ку уйăхра пурнăça тăнăçлăх кÿрекенсен сăнарне калăплĕç. Ĕçри хирĕçĕве те, пĕлĕшсен хушшинчи тавлашăва та сирмелле пулĕ. Çавăнпах таврари çынсем пирки нумай çĕннине – кăмăллах маррине – илтетĕр. Хăвăра вăйлă туйни, пурнăçра ыррине çеç курни ыйтусене татса пама пулăшĕ. Анчах пурнăçа тĕппипе улăштаракан йышăнусем тума ан васкăр.

Çемьери хутшăнусем йĕркеллех темелле. Унсăр пуçне тахçанхи кÿренĕве ирттерме май килĕ. Çывăх çынсене хăвăр пулăшăва сĕнме, алă пама ан ÿркенĕр.

**ШЫВТĂКАНСЕМШĔН** те çĕртме туйăм ылмашăвĕ енчен пуян. Тем тесен те кăмăла мар, шухăшсене парăнмалла, хăвăра алăра тытма вĕренмелле.

Çемьере лăпкă пуласса кĕтни те тÿрре тухмĕ. Пурнăçăн шурă йĕрĕсем хурисемпе тата та час улшăнаççĕ. Сăмах пама ан васкăр – ăна пурнăçлама кайран ытла та йывăр пулмĕ-и?

Халĕ сирĕн вăхăта чи малтан килтисене, вĕсемпе пĕрле канассине уйăрмалла. Уйрăмах – ачасене тимлĕх кирлĕ.

**ПУЛĂСЕН** те шухăшласарах калаçмалла. Сăмахпа амантма пулнине манмалла мар. Пурнăçăн çак тапхăрне, тен, сире кирлĕ, сирĕн кăмăлăр туртнă пек мар, пачах урăхла ирттермелле пулĕ.

Çĕнĕрен юратасран пĕрре те ан шикленĕр. Вĕри туйăм кирлĕ те сире халĕ! Анчах та пуçăра ан сухатăр.

Ĕçре пĕтĕмпех лăпкă.





КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Манăçми чечек çыххи

Çĕр çинчи мĕнпур чечекрен темшĕн мана ытларах утмăлтуратпа салтак тӳми килĕшеççĕ. Ача чухне кассипех пуçтарăнса ятарласа хирти ыраш пуссине пуçтарма çӳрекенччĕ вĕсене. Пучаххипе пĕрле татса килнĕ çыхă ытла та хӳхĕм курăнать çав. Ытармалла мар уй-хир чечекĕсем çуллахи вăхăтра кашни пӳлĕмрех чӳхенсе ларатчĕç. Мĕнех, шурă тутăрлă лантăш та, сирень те, астра та хăйне май хитре, анчах та ман чуна çырлахтаракан утмăлтуратпа салтак тӳмине çапах темшĕн çитеймеççĕ пек туйăнать. Урампа утса пынă май çерем çинчи сарă кукшапуç çинчен те куçăма илейместĕп. Çĕрулми йăранĕ хушшинчи тарăхтармăш йытпырши те хăйне май илĕртӳллĕ. Кама мĕн килĕшет çав... Тепри вĕсене, тен, асăрхамасть те.



Аслă класра вĕренеттĕмĕр ун чухне. Чĕкĕнтĕр ани çинче кашнинех пай уйăрса панăччĕ. Иккĕмĕш хут çумлама кайсан арçын ачасем хăйсен ретне хăвăрт кăпкалатса тухрĕç те пире пулăшма пикенчĕç. Туслăччĕ пирĕн класс. Учительсем сас хăпартса вăрçни те, хăлхаран туртни те куç умне тухмасть. Ыттисемшĕн яланах тĕслĕх пулнă шкулта. Каччăсем чăн-чăн хӳтĕлевçĕсемччĕ. Хĕрсенчен хăшне те пулин сăмахпа кăна кӳрентер-ха, çийĕнчех хăлха чикки лектеретчĕç.

Хирте кунĕпех çумласа çăвар хытă типнĕччĕ. Çакна сиссе кӳршĕ Саша хăвăртрах çăлкуç шывĕ ăсма чупрĕ. Чĕкĕнтĕр ани вĕçне çитсен канма ларни те асрах. Хĕрсем сумкисенчен çимелли кăларса хучĕç, арçын ачасем сăрт çинче кăвайт чĕртрĕç. Саша илсе килнĕ шыва ăш каничченех ĕçрĕмĕр. Кăвар çинче пĕçернĕ çĕрулмирен тутлăраххи урăх нимĕн те çук пек туйăннăччĕ ун чухне. Юрăн гитари ăçтан тупăннине халĕ астумастăп ĕнтĕ. Чĕкĕнтĕр ани çине ятарласа илсе килнĕши? Хитре юрланăран шкулти мĕнпур уяврах сцена çинчеччĕ вăл. Кил çинчен мансах юрату юррисем шăрантартăмăр. Ăнсăртран килсе тухнă агроном та чунĕ чĕтманран чарăнсах итлесе тăнăччĕ.

Ыраш пусси урлă яла тӳрĕ çул выртатчĕ. Малтикассем пĕчĕк вăрман витĕр каяс терĕç. Эпир пĕрремĕш класранах пĕр парта хушшинче ларакан Людăпа уй урлă вĕçтертĕмĕр. Ял вĕçĕнче пурăнакан тантăшăм килне кĕрсе юлнăран малалла пĕчченех утрăм. Тахăш хушăра Саша хăваласа çитрĕ. Аллинче – ылтăн ыраш пучаххипе утмăлтурат çыххи. Алран вăтанса тыттарчĕ те чечексене куçне хăвăртрах тартрĕ. «Ятарласа сан валли татрăм», – терĕ хăюсăррăн. Çав вăхăтра чĕре пурнăçăмра пĕрремĕш хут урăхла – тухса тарасла – тапрĕ.

Тăван шкулпа сывпуллашнăранпа пилĕк çул çитрĕ. Çурçĕрте пурăнакан кӳрше шкул пĕтернĕренпе те курманччĕ. Тахçантанпа кĕтнĕ тĕлпулăва Саша кучченеçпе çитрĕ. Утмăлтуратпа салтак тӳми çыххи çинчен те манман. Уяв сĕтелĕ çинче унран хӳхĕмрех чечек урăх çукчĕ те. «Утмăлтурата халĕ те малтанхи пекех юрататăн. Апла мана та манса кайман. Эх, шăпа, телей тени хамăр ĕмĕтленнĕ пек килмест çав», – терĕ алăран ачашшăн сĕртĕнсе кӳршĕм.

Ачаран пĕрле выляса, çапăçса ӳснĕскере савни тума пулать-и вара? Мана пачах урăххисем килĕшетчĕç ун чухне. Саша ку таранччен вăрттăн юратса пурăннине çав тĕлпулура кăна пĕлтĕм. Кун пек те пулать иккен.

**ЛЮДМИЛА.**

ЧУНРИ

# Юратусăр пурнăç çук

Упăшка пилĕк çул пĕрле пурăннă хыççăн пăрахса кайрĕ. Çăмăлттай арçынна мĕн тăвăн, пахча хыçне вĕренлесе хума пăру мар вăл. «Шăмă кăшлама вĕреннĕ йытта ниепле те чарма çук», – тесе ахальтен каламаççĕ пуль çав. Чупкăн арçын та çавнашкалах, ăна яланах ютти илĕртет. Упăшка тепринпе те нумай пурăнаймарĕ, виççĕмĕшне тупрĕ. Çав вăхăтрах ман пата каялла таврăнасшăн пулчĕ. Каçару ыйтрĕ, йăлăнчĕ, çĕр варринче алăкран шаккаса çӳрерĕ... Çук, путсĕр арçынпа урăх çыхланас темерĕм. Тепĕр хут йăнăшасран та шиклентĕм. Вăхăт иртнĕçемĕн лăплантăм. Пĕччен пурăнма тытăннăранпа кĕçех виçĕ çул çитет. Ывăлăм ашшĕсĕрех ӳсет. Йывăр пулчĕ мана çав мăшкăла чăтса ирттерме. Çынсен умĕнче калама çук намăсчĕ. «Никама та кирлĕ мар эсĕ, упăшку та ав урăххи патне пăрахса кайрĕ», – ĕçре çакнашкал каласа кӳрентернине чăтма епле йывăрччĕ. Мĕн чухлĕ куççуль юхтарман-ши эпĕ? Çунатăмсене тăруках шатăр! хуçса янă кайăк пекех туяттăм хама. Ял халăхĕн урăх мĕн ĕç, çын çимĕсĕр чунĕ лăпланать-и вара? Анчах та кирек мĕнле сурана та вăхăт сиплет иккен. Акă эпĕ каллех юрататăп. Юлашки вăхăтра чĕрем канăçа çухатрĕ. Кăвакарчăнсем те мăшăрлă, манăн мĕншĕн çак çĕр çинче пĕччен пурăнмалла?

Анчах та аякра эсĕ. Хăçан пĕрле пулăпăр-ши? Чунăм та сансăр пуçне урăх никама та йышăнмасть. Эсĕ те малашне мансăр пурăнаймассине туятăп. Çырăвусенчен те, калаçнинчен те çакă уççăнах палăрать. Эпĕ те хĕрарăм, манăн та ыттисем пекех телейлĕ пулса курас килет.

Ăш вăркать. Чĕрем теме сиссе хурланать. Сана çухатасран хăратăп эпĕ. Пилĕк уйăх каялла паллашни асран тухмасть. Лапка-лапка кăпăшка юр çăватчĕ çав каç. Унтанпа виç-тăватă хут кăна тĕлпулма тӳр килчĕ пире. Анчах та çав хитре самант пурнăçăмăрсене тĕпренех улăштарчĕ. Чун-чĕререн саврăмăр пĕр-пĕрне. Уйрăлаймасăр темиçе сехет телефонпа калаçаттăмăр. Калаçу сыпăнсах пынăран пирĕн туслăх юратăва кусрĕ. Кĕçех тавранатăн. Хальхинче – яланлăхах. Тĕнче касса ывăнса çитнĕскер çемье пирки ĕмĕтленетĕн. Ывăлăма та юрататăн эсĕ. Вăл та сана тахçантанпах кĕтет. «Садсем чечеке ларсан, сиреньсем çурăлсан тĕлпулăпăр та урăх нихăçан та уйрăлмăпăр», – тесе çырса ятăн уйăх каялла. Кашни кунах кĕтетĕп сана. Эх, юратусăр пĕр кун та пурăнма çук иккен ку çĕр çинче!

**ГАЛИНА.**

МЫСКАРА

# Ялти «туй»

Ку ĕç виç-тăват çул каялла пулса иртнĕччĕ, çапах та çав мыскара халĕ те куç умĕнчен каймасть.

Çĕнĕ çул хыççăнхи кану кунĕсем. Уяв вăхăтĕнче пурте ялта. Калаçса татăлнă тейĕн, пĕр кунхине каç пулттипе хуçалăхăн хурал пӳртне чылайăн пуçтарăнтăмăр. Вăрахчен калаçса лартăмăр. «Мĕн тумалла?» – çакăн пек ыйту сиксе тухрĕ çамрăксен умне. «Атьăр лавккана, кăмăлсене çемçетме пĕр-ик кĕленче илер», – сĕнчĕ пĕри. Килĕшрĕç унпа, пĕри кĕсйинчен укçа кăларчĕ, унтан тепри. Ак, хайхи, самаях пуçтарăнчĕ. Иккĕн лавккана утрĕç, анчах хăвăртах каялла таврăнчĕç. Хупă иккен. Вăхăчĕ те пурччĕ çав, каçхи çиччĕ патне çывхаратчĕ. Телей тени тепĕр чухне юнашарах çӳрет иккен. Çав самантра хурал пӳрчĕ умне çăмăл автомашина çитсе чарăнчĕ. Çамрăк водительпе хăвăртах пĕр чĕлхе тупрăмăр. Машина кĕçех райцентр еннелле вĕçтерчĕ. Юлнисем вара кочегарка çуртне утрĕç.

Вăхăт мĕн чухлĕ иртрĕ, никам та сехет çине пăхмарĕ, автомашина каялла вĕçтерсе те çитрĕ. Каччăсен аллинче – тулли сумкăсем. Акă кочегаркăра сĕтел те хатĕр. Гриняпа Владимир тата ыттисем сак çине вырнаçса ларчĕç. Лукашов уяв ячĕпе салам сăмахĕ калас тĕллевпе алла черкке тытрĕ, тути патне илсе çитерчĕ кăна – Ритăпа юлташ хĕрĕ кĕрсе тăчĕç.

– Иртĕр тĕпелелле, пирĕнпе уява хутшăнăр, – терĕ Лукашов.

– Çук, хăвăрах ларăр, – харăссăн каларĕç хĕрсем. Хайхискерсем каялла тухма тăчĕç, анчах каччăсем вĕсене çулне пӳлчĕç.

– Атьăр туй тăвар! – тăруках сĕнӳ пачĕ Микула. – Килĕшетĕр-и?



Хирĕç калакан пулмарĕ. Анчах каччипе хĕрне кама тумалла? Пĕр-пĕринпе сăмахласа илнĕ хыççăн çакăн пек шухăш патне çитсе тухрĕç: Гриня – авланакан каччă, Мила качча каякан хĕр пулать. Владимир хăйматлăх ашшĕ пулма килĕшрĕ, Лукашова вара кĕçĕн кĕрӳ турĕç, каччă çумĕ те тупăнчĕ. Кунашкал ĕçме сăлтав та пур. Гриняпа Милăна варрине лартрĕç. Эх, пуçланчĕ ялти «туй».

Кашниех «мăшăр» ячĕпе ăшă сăмах калама пуçларĕ, пурте ăнăçу сунаççĕ.

– Сан аппун мăшăрĕ параппан та, купăс та калама ăстаччĕ. Тен, ăна чĕнсе килмелле? – терĕ пĕри.

– Çук, хамăрах, туй такмакĕсене купăссăрах шăрантарма пулать вĕт, – хăпартланчĕ Василий.

Ырă шухăш Лукашова питех те килĕшрĕ, ташă картине чи малтан тухса тăчĕ вăл, ун хыççăн ыттисем. Каччăсем тапăртатса ташлама пуçларĕç, кам мĕнле такмак пĕлет, çавна шăрантарать. Ши! Ши! шăхăраççĕ уçă саслисем. Хăйматлăх ашшĕне Владимира пукан çине лартрĕç те çӳлелле пеме пуçларĕç. Темиçе хутчен çĕклесен чарăнчĕç, пурте сĕтел хушшине вырнаçса ларчĕç.

– Йӳçĕ! Йӳçĕ! – илтĕнсе кайрĕ çав самантра.

Анчах каччăпа хĕр вырăнтан та хускалмарĕç. Çакна курнипе вăйлăраххисем иккĕшне пĕр-пĕрин çумнех «çыпăçтарса» хучĕç. Шӳте юратакан Лукашов Владимира таçтан тупăннă кушака тыттарчĕ.

– Эсĕ хăйматлăх ашшĕ шутланатăн. Çавănпа та кушак парне вырăнне пулать, – ăнлантарчĕ вăл.

Юлташĕ мĕн каланине Владимир туххăмрах пурнăçларĕ, «мăшăра» кушак тыттарчĕ.

Кĕçĕн кĕрӳ черкке хыççăн черкке çаварчĕ. Тĕлĕнмелли çакă пулчĕ: те ташланипе, те вар тытиччен ахăлтатнипе пĕри те ӳсĕрлмерĕ. Гринькăпа Мила шӳтшĕн кӳренмерĕç. Çав каç пурте килсене тулли кăмăлпа саланчĕç.

Чăн та, тепĕр икĕ-виçĕ кунран ялта сăмах тухрĕ: Гриня авланнă. Анчах хĕрĕ хăш ялтан тупăннă – çавна никам та пĕлмерĕ.

**Юрий КОРНИЛОВ.**

Элĕк районĕ.



Александр АРТЕМЬЕВ

# Ан авăн, шĕшкĕ!

**/Малалли. Пуçламăшĕ 17-20-мĕш номерте/.**

– Хама та темле лайăх мар пек пулчĕ, – пуçларĕ казах. – «Кала-ха, Курман, Петĕр батальонта чăнах та чи япăх салтак-и? Ма пурте пытаратăр манран?» – тет. Хăй çав тери пăшăрханнă.

Ку хыпара илтсен алăри кашăкăм шăлтăрт! кăна тухса ӳкрĕ.

– Гончарук каласа панă! – терĕм тӳрех.

– Çук, Петенька, йăнăшатăн, – пӳлсех каларĕ мана Ворончихин. – Гончарука аван пĕлетĕп: куç хыçĕнче элеклекен çын мар вăл, чăн-чăн салтак. Лиза сан çинчен ăнсăртран çеç илтме пултарнă, анчах пĕлсех çитеймен-ха: пĕлнĕ пулсан Курманран ыйтмĕччĕ.

– Гончарук – пит маттур старшина, – кала пуçларĕ Курмангалиев. – Ун пеккипе аптрас çук. Кăшт хаяртарах командир та ĕнтĕ – пултăр-и, çав лайăх та! Юпи çĕрĕк пулсан хӳми çирĕп пулаймĕ теççĕ.

– Мĕн калĕ ĕнтĕ Лисук мана? «Эх, земляк!» тейĕ çав йĕрĕнсе...

– Ан парăн, батыр, ан парăн! – юрласа ячĕ Виктор кашăкĕпе сулкаласа.

– Э-э, тăхта, тăхта, Ворончихин! Хальхинче малтанхи сăмахĕсемпех юрлас пулать, – пӳлчĕ тусне казах. – Мĕнлеччĕ-ха? «Ан сивĕн, савни, ан сивĕн...» Çаплаччĕ-и-ха, Астрăп? Йывăç çамрăкла çеç авăнать, теççĕ казахсем. Эс ан авăн: юрататъ пулсан, «кăштах сăмах илтнишĕн» сивĕнмĕ. Асту ак, батальонĕпе те сан пек маттур связист пулмĕ! Пĕр йăнăш тумасăр тӳрех ăста пулаймăн.

«Курăпăр-ха, кам пулăп унта. Япăх салтак пулсан та авăнас мар, пуçа усас мар, малалла пăхас!»

Виççĕмĕр эпир пĕр-пĕрипе ылмашăнса ĕçлетпĕр, çавăнпа та тепĕр кунне полк штабне кайма мана черет çитрĕ. Каймарăм. Маттур связист пулмасăр та Лисук куçĕ умне курăнас мар тесе тупа турăм. Хам вырăна Ворончихина кайма ыйтрăм. Вăл, виççĕмĕртен аслăраххи пулин те, ман сăмаха итлерĕ, кăмăлĕ ырă çав – вырăс кăмăлĕ.

Анчах Лисукпа тĕл пулассинчен пурпĕрех хăтăлаймарăм. Ворончихин кайсан тепĕр куннех пирĕн пата термоспа яшка илсе килчĕ вăл. Шăпах траншейăна, эпĕ ларнă çĕре, çитсе кĕчĕ. Кĕске кĕрĕк, шурă çăмлă мулаххай, хулăн шăлавар тăхăннă, арçын ача пек. Çи-пуçĕ йĕп-йĕпех. Пичĕ нар пек хĕрлĕ, çӳçĕ арпашăнса кайнă, леш чăрсăр çӳç пайăрки хăлха çумĕнче кăтраланса вĕçкелет. Хĕр ăшша пиçĕхнĕ, ывăннă, йывăррăн сывлать, çавах хаваслăн кулкалать.

– Аран шыраса тупрăм, – терĕ вăл траншея тĕпне ларса. – Уй урлă каçнă чух фашистсем кăштах персе ӳкермерĕç. Хырăмпа шуса халтан кайрăм. Пăх-ха, Петĕр, – кăтартрĕ вăл термосне ман ума лартса.

– Акă...

Термоса пуля шăтарнă иккен. Çавна курсан, эпĕ хам хуйха та манса кайрăм.

– Лиза! Мĕншĕн кунта çитиех килтĕр? Сире амантма е вĕлерме пултараççĕ.

Хĕр ман çине пăхрĕ те ăшшăн-ăшшăн йăлкăшса кулчĕ. Хура пĕлĕт айĕнчен сарă хĕвел тухнăнах туйăнчĕ. Хам ăçта ларнине те мантăм...

– Пĕлетĕн-и, Петĕр, мĕн аса килчĕ мана, – тет Лисук. – Хамăр колхозри çураки вăхăчĕ... Пичче хирте тракторпа сухалатчĕ, эпĕ ун патне апатпа тухаттăм. Çакăн пек лараттăм та ун умне – вăл çинине пăхса савăнаттăм. Шăкăлтатса кăна калаçаттăмăр... Халĕ Карпатра çапăçать вăл...

– Э-эй! Пĕтĕм Чăвашстан пухăннă-çке кунта! – траншейăна Курмангалиев сиксе анчĕ. – Салам, Лиза! Аллаха шĕкĕр кучченеçпе килнĕшĕн... Казахсем ахальтен каламан çав: повар мулларан та хаклăрах тенĕ. Курсак пуш-пушахчĕ-ха.

Курмангалиевăн кирек хăçан та шӳт тупăнать, ним çукранах култармалли тупать вăл.

– Пурнăç юсанать, Лиза, – тет казах çапă купи çине ларса.

– Акă тӳшек те мамăкран, пӳртĕмĕр те çĕнĕ, лартнăранпа эрне те çитмен-ха. Арăм та çамрăк авă /вĕр-çĕнĕ автоматне кăтартать/, пĕр-пĕрне хытă саватпăр, ан та çулăхтăр çичĕ ют...

– Курман, – ыйтрĕ Лиза сасартăк, – эсĕ-и вăл каçхине комбат патĕнче лараканни?

– Вара?

Хĕр сăнĕ тĕксĕмленчĕ: урăх сăмах кĕтнĕччĕ пулас вăл.

– Çук, нимех те мар. Полк штабĕнче комбат сана мухтарĕ эппин: ман связист питĕ маттурскер, терĕ.

– Çук, ман çинчен мар... Полк штабĕнче каçхине комбат патĕнче Петĕр пулчĕ, – терĕ Курмангалиев хăй чапне ман çине йăвантарса. Тĕрĕс мар тесшĕнччĕ эпĕ ăна, анчах тусăм мана сăмах чĕнме те памарĕ, калаçăва тӳрех урăх çĕрелле пăрса ячĕ.

Ĕненчĕ-ши ăна Лисук, ĕненмерĕ-ши? Темшĕн ун сăнĕ савăнăçлăн йăлкăша пуçларĕ. Каяс умĕн тин салхуланчĕ вăл, пĕр кунхи пекех хурлăхлăн та ăшшăн пăхса илчĕ те ман çине, алă тытрĕ:

– Чипер юл, Петĕр. Асту, сыхланарах çӳре, – терĕ шăппăн.

Çак сăмахсем яланлăхах чĕреме кĕрсе юлчĕç. Ăçта кăна, мĕнле çапăçусенче пулмарăм пуль ун хыççăн – яланах çак сăмахсем аса килетчĕç.

Тепĕр куннех наступлени пуçланчĕ. Виçĕ кун çапăçнă хыççăн Пилькаллен хулине илтĕмĕр. Хĕрӳ кунсем килсе çитрĕç. Кайрăмăр вара фашистсене хăваласа – кунсерен темиçе ял çавăрса илетпĕр. Лини карса та ĕлкĕрмелле мар: халĕ çеç çыхăну йĕркелетĕн, тепĕр сехетрен кабеле катушка çине чĕркетĕн те каллех çĕнĕ вырăна куçатăн. Выртса канма та, ал-ура типĕтсе илме те вăхăт çук, пĕр чарăнмасăр малалла каятпăр. Пирĕн тылри чаççем кая юлчĕç. Лизăна пĕр-ик эрне кураймарăм. Мĕн тери тĕл пулас килнине сăмахпа калаймăн та.

Нивушлĕ мана вăрçă хирĕнче юратмах тӳр килчĕ-шим? Кунта кашни сехетрех тăшман пульли темĕнле вăйлă юратăва та татма пултарать.

– Вăрçи вăл çухатусăр мар та-ха, çапах та хытă савакан темле йывăрлăха та çĕнтерет, – тет мана Курмангалиев. – Кăна эпĕ хамран каламастăп, пирĕн хĕвеллĕ Казахстанра акынсем çапла юрлаççĕ.

Фашистсене малаллах хăвалатпăр. Инстербургран иртрĕмĕр, Кенигсбергалла çывхаратпăр.

Фронтовик пурнăçне кунсерен хăнăхса пыратăп, хам ĕçе те йĕркеллех тăвакан пултăм. Пуля, снаряд сассине те хăнăхса çитрĕм ĕнтĕ. Тупăсем тилĕрсе пенĕ чух та çывăрма пултаратăп. Çапах та кунпах чун лăпланмасть. Юлташсем çине пăхатăп та, вĕсем маттуррине кура чун савăнать, анчах хам çинчен шухăшлама та аван мар: батальонти чи айван салтак вĕт! Хам тĕллĕн ĕçлессе те, çапăçасса та шансах каймастăп. Связист ĕçĕ вăл, Курмангалиев пек каласан, сăвă çырасси пекех, йывăр та кăткăс ĕç: пĕрин май килет, теприн – яхăнне те пымасть.

Гросс-Скайгиррен хулине çитсен тăшман çирĕпленсе ларчĕ те пĕр утăм та чакмасть, çĕр çăтасшĕ! Нимĕççем вăйлă контрнаступлени тума хатĕрленеççĕ тет иккен.

Саперсен батальонне оборонăна тăратрĕç. Мана вара полкран чĕнсе илсе вĕсем патне ячĕç. «Дивизи командăй пункчĕпе саперсем хушшинче çыхăну тытмалла сан», – ăнлантарчĕ мана взвод командирĕ.

– Ну, Петĕр-батыр, – терĕ уйрăлнă чух Ворончихин, – вăхăт çитрĕ, кăтарт ĕнтĕ хастарлăхна! Асту, ан авăн...

– Кăштах çилĕ вĕрнипе, – хушса хучĕ Курмангалиев.

Саперсен батальонĕ икĕ шоссе пĕрлешнĕ çĕрте, пĕчĕк айлăмра вырнаçнă. Малти траншейăран инçех те мар, юханшыв хĕрринче, пысăк чул çурт ларать /темĕнле барон именийĕ пулас/, батальон командирĕ çав çуртăн путвалне вырнаçнă.

– Ну, связист, – теççĕ мана, – яланах сыхă тăрас пулать, лини ан татăлтăр! Пĕтĕм шанчăк сан çинче.

**/Малалли пулать/.**

## САВĂ СĔВЕМĔ

*К.В.Иванова халалласа*

**/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ иртнĕ номерте/.**

Пĕр-пĕччен е иккĕн пулăн,
Ан çухат нарспилĕхе:
Ут патваррăн та хăюллăн!
Çак сăмахăм – пиллĕхе".

– Эй, анне! Çаплах
килмерĕç,
Пурччĕ ман калаçмалли...
– Çук-ха, çук çав,
çитеймерĕç,
Килетех-ха Натали.

Сăвăçа вĕрилентерчĕ,
Ӳслĕкĕ чыхăнтарать.
Пĕр самант лăпланчĕ терчĕ,
Кăшт канать вăл, çывăрать.

Ту çине ăна хăпартрĕç,
Вăл калать пек шăхличе.
Кайăксем юрра шăратрĕç, –
Тĕлĕнсе итлет тĕнче.

Вăрансан тӳрех каларĕ
Тĕлĕкне хăй амăшне.
– Ырă ят илтетĕн мар-и?
Сарăлĕ вăл инçене.

"Мĕн чысра илтейĕп ĕнтĕ?
Тунă ĕçĕм йышлă мар.
Вĕçленмен ĕççем пулин те
Тĕсĕ-пуçĕ чыслă мар.

Тĕрлĕ пурлăх хăварасшăн,
Чăн, тăрмашрăм сахал мар.
"Нарспипе" юмах таврашăм,
"Çĕн Сăмах", "Псалтирь",
букварь.

Темĕн чул редакциленĕ,
Ӳкерӳ, фото ĕççем...
Тен, ытти те хисепленĕ,
Чылаях иккен вĕсем.

Ĕмĕтре кунтан ытлаччĕ,
Тек тӳр килмĕ вĕçлеме.
Иван Якăльч ăнтăлатчĕ
Библие пичетлеме.

Пушкина та куçарасшăн
Кăмăл вĕçĕм хĕпĕртет.
Павлов опера хайласшăн:
Çыр часрах либретто тет.

Пулаймарăм ӳкерӳçĕ,
Чи сăваплă – çав ӳнер.
Ах, Эрехĕрри çăлкуçĕ,
Ту çине тапаканскер!

Геннадий ЮМАРТ

# Таринкка

Пурччĕ манăн ӳкерессĕм
Иксĕре Таринккапа.
Ах, савниçĕм, ах, чĕкеçĕм!
Ма килмерĕн аппапа?..

Савнă тусăм ялĕн ячĕ
"Хĕр йĕрри" пек илтĕнет.
Чирĕм саншăн хуйхă ячĕ,
Сан куçу куççульленет.

Ту çăлкуçĕн пăрлă шывĕ
Çав куççуль пек çуталать.
Кăмăлу сан пулмĕ сивĕ,
Эпĕ кайăп, шыв юлать...

Ма телей пулмарĕ пирĕн?
Ма пĕтетĕп çамрăкла?
Çакă шухăш каçăн-ирĕн
Пусмăрлать мана ытла.

Шав çынра куратпăр айăп,
Пысăк айăп – хамăрта.
Ах, ăçтан-ха пытарайăп –
Ашкăнсаттăм масарта.

Çынпала тӳрккес тавлашрăм,
Чыс тумарăм чиркĕве.
Ĕçкĕпе чылай айкашрăм,
Уяман ăша-сивве.

Каçару ыйтсан каçаймĕ,
Тӳрленеймĕ халĕ тин.
Сăв калаймĕ, калаçаймĕ
Хăрнă-типнĕ Кĕçтенттин.

Ху пуçна хăвах шăтарăн
Терĕ юмăç та хама.
Вилĕмрен ăçтан-ха тарăн?
Ӳпкелеймĕн никама.

Халь Турра та ӳпкелеймĕн,
Култăм хам ăраскалран.
Пулманах та мар телейĕм,
Хам вĕçертрĕм аларан.

Йăнăш пулчĕ-ши темешкĕн
Сахал мар çав ман сăлтав...
Шанчăк сӳнчĕ чĕрĕлмешкĕн,
Мĕн пӳрнишĕн – пысăк тав!

Тăлăха тăрса юлаççĕ
Вĕçленсе çитмен ĕççем.
Ĕнтĕ манăç та пулаççĕ
Çырăнман сăмахăмсем.

Питĕ шел хĕрсе куçланă
Ӳкерес сăнарсене,
Питĕ шел – юлса пуçланă
"Кив Сăмах" ал çырăвне.

Ма килмерĕн, Таринккаçăм?
Е çул тытрăн аякка?
Кĕтрĕм-кĕтрĕм ирĕн-каçăн,
Хурлантартăн Кĕçтука.

Хатĕрччĕ тухса тармашкăн
Эс килтен мăнастире.
Хăвшăн çеç хыпса лармашкăн
Ан шутла ăс инçетре.

Аннӳне ăçтан пăрахăн?
Тупăн шелсĕр ӳкĕнӳ.
Пурăнсассăн та хăраххăн
Пултăрччĕ çумра аннӳ..."

* * *

Масартан саланчĕ халăх.
Çĕнĕ вил тăпри патне
Юлнă ик хĕрарăм. Кăлăх
Асăнаç поэт ятне.

– Çитеймерĕм –
пиллеймерĕн.
Каçарсам çапах, Кĕçтук.
Пултăн эс пĕртен-пĕрскерĕм,
Сан пекки тупас та çук...

– Таринкка, каяр. Шăнатăн, –
Терĕ лăпкăн Натали.
Хĕр хӳхлет, чĕтрет чăнах та,
Шав куçне шăлать алли.

# Вера Глаголева – футболла выляkан кукамай



**Çăлтăрсен вăрттăнлăхĕпе паллаштарнă май актриса тата режиссер хăй мĕншĕн какай çиме пăрахни тата мăнукĕсене самăрлăх чирĕнчен мĕнле упрани пирки каласа кăтартать.**

### Виçере тытăнса тăма мĕн пулăшать?

**– Вера, эсир кинора хĕрĕх çул ытла. Ĕçĕрсенчен çакă аван курăнать – виçерен ниxăçан та тухмастăр...**

– Тĕрĕсех асăрханă эсир. Çие юлнă тапхăрта та – манăн вара виçĕ хĕр пĕрчи – эпĕ ача йывăрăшĕ чухлĕ кăна хушаттăм. Çамрăк чухне 164 сантиметр çӳллĕшпе 45 килограмм таяттăм. Пĕр вăхăт çапах та самăрălма пуçланă тапхăр манăн та пулнă. Паянхи пек астăватăп: тĕкĕр умне пытăм та – унтан ман çине палламан хĕрарăм пăхать. Лару-тăру тараса çине тăрсан уçăмланчĕ: утмăл килограма яхăн!

**– Мĕн турăр вара?**

– Сахалрах çиме пуçларăм. Мана ку енчен ăнăçнă темелле – генетика аван. Чăн та, эпĕ спортпа та туслă-ха, яланах ларма-тăма пĕлмен. Ытларах арçын ачасемпе, пиччен Борисăн юлташĕсемпе, хутшăнаттăм. Эпир картишĕнче сехечĕ-сехечĕпе казак-хурах йышши вăййсене выляттăмăр. Эпĕ хамăр таврари футбол командин вратарĕ те пулнă. Калори ăçтан хушăнтăр кун пек чух? Пиччепе иксĕмĕр Хура тинĕс хĕрринче ӳкерĕннĕ сăнӳкерчĕк пур çемье архивĕнче – икĕ скелет тăратпăр, иксĕмĕрĕн те хырăмсем путса кĕнĕ... Подъезд умĕнчен иртнĕ май унта ларакан кинемейсем: "Ачăрсене мĕншĕн апат çитерместĕр? Кур-ха: епле начаркка!" – тетчĕç те анне питĕ аванмарланатчĕ. Çавăнпах пире асанне – профессипе вăл тухтăрччĕ – апат антармалли коктейльсемпе чыхатчĕ. Унăн тытăмĕнче алоэ, шăккалат, какао пурччĕ. Анчах та ку та пулăшмастчĕ. Апатне эпир капла та çинĕçке, ларма-тăма пĕлмен – çавă кăна...

### "Усал йытă"

**– Асаннĕре кура мăнукăрсене эсир те апат вăйпах çитерме тăрăшатăр-и?**

– Çук! Эпĕ начар ачасене юрататăп. Хĕрĕмсене пăхсах тăраттăм, каярахпа мăнукесене сăнама пуçларăм – ан самăрăлччăр. Эпĕ Бенджамин Спок педиатр вĕрентĕвне пăхăнатăп – сывă ача мĕн чухлĕ çимеллине хăех пĕлет. Ытлашши апат çитерсе самăрăлтарман ачасем, шансах тăратăп, ӳссе çитсен ашшĕамăшне хăйсемех тав тăвĕç. Апат культне пуçарманшăн. Халĕ диетăна пăхăнса асапланма тивменшĕн.

**– Апла сирĕн хĕрсен те ытлашши килограмсем тĕлĕшпе йывăрлăх пулман ахăр...**

– Телее, пулман. Маша ку енĕпе мана хывнă – эпир совеçе шаларах чиксе хумасăрах икерче хăймапа çиме пултаратпăр. Аня вара пирĕн – балерина. Çавăнпа та унăн пылак тата çăкăр-булка тавраşне сахалрах çиме лекет. Çавăнпа та эпĕ çемьере усал йытă пекех: "Çитет! Çиме чарăнăр!" – тесе кăшкăрса кăна тăратăп. */Кулать/.*

### Какайсăр, анчах хуратулпа...

**– Упăшкăра та-и?**

– Çук, Кирилăн хăйĕн пуç пур. Сăмах май, çулсем иртнĕ май имшер çынсен те – япаласен ылмашăвĕ пăсăлса пынине кура – сахалрах çиме тăрăшмалла. Таçта вуланăччĕ – çамрăк чухне эсир 2000 калори çисе те самăрăлман тăк, 40-ре, 50-ра – пушшех те, ку номер йĕрсĕр иртсе каймĕ, 1800 таран чакармах тивĕ калорисене. Çавăн чухне кăна ытлашши килограмсемпе вăрçă пуçармасан та юрать.

**– Анчах та диетологсем ирхине апат лайăх çимелли пирки калаççĕ.**

– Эпĕ ку саккуна пăхăнмастăп. Ирхине мана пĕр чашăк кофепе пĕр тост çитет. Кăнтăрла тĕлнелле кăна хырăм выçнă пек пулать. Ун чухне вара вĕри апат çимеллех. Анчах вăл та – пахчаçимĕçрен хатĕрлени кăна. Кăнтăрла та вĕри апат çиме май килмесен каçхи валли хăваратăп: çав çимĕçсенех, анчах та – чĕрĕлле. Тепĕр чухне хырăма ăшаланă кăмпапа е пулăпа улталатăп. Хуратул пăттине питĕ кăмăллатăп. Сăмах май, манăн "Две женщины" фильмри тĕп роле выляkан Рэйф Файнс час-часах хăйне валли шăпах хуратул пăтти пĕçерме ыйтатчĕ. Рэйф ăна тахçанах килĕштернĕ иккен, Лондонра та çак кĕрпене вырăс лавккисенче туяннă. Кино ӳкернĕ чухне вара юнашар ялти лавккана ятарласах туянма çӳретчĕ. Çакă кăна кăсăклă – "Список Шиндлера" фильмăн çăлтăрне ял лавккинче куракансем мĕн туйнă-ши?

### Импĕр хырăма улталать

**– Апат хушшинче хырăма улталас йăла пур-и сирĕн?**

– Паллах. Кун пек чухне импĕр вĕретнĕ шывпа лимон сĕткенне хутăштарса ĕçетĕп. Тухтăрсем çак хутăш иммунитета çирĕплетнине те калаççĕ. Эпĕ ăна чей вырăнне ĕçетĕп – ĕçре те, килте те.

**– Апат тиркес йăла пур-и тата?**

– Çăнăхран хатĕрленине тата пылак çимĕç çиместĕп. 25 çула яхăнах каялла рационран какая пачах кăларнă. Малтанах упăшка какай çиме пăрахрĕ. Кирилл çакна пĕлтернĕ хыççăнах çĕрле тĕлленсе выртатăп: унта хамран хам ыйтатăп – киленӳ илмен апат мĕн тума кирлĕ-ха мана? Ахăртнех, хăнăхнă йăла кăна ку. Апла тăк какайсăр та пурăнма пулать... Сăмах май, вăхăт иртнĕ май Кирилл каллех какай çиме пуçларĕ. Манăн хĕрсем те вегетарианецсем мар. Эпĕ вĕсене хамăн çула суйласа илме хистемен те. Кашни организмăн хăйĕн нуши.

### Спорт

**– Спортпа вара халĕ те туслă-и? Çамрăк чухне эсир ухăран пенине пĕлетпĕр. Спорт мастерĕн нормативне те пурнăçланă, Мускав çамрăкĕсен команди йышĕнче ăмăртнă...**

– Çавăн чухне ăнлантăм та – пысăк спорт ман валли мар. Тренажер залĕсем те – çав ретренех. Эпĕ бассейна та, фитнес залне те çӳреместĕп. Капла та питĕ нумай хусканма тивет. Тепĕр чухне мăнуксемпе футболла выляtăп е вĕсемпех велосипедпа ярăнатăп. Çемйипех Мальдива утравĕсем çинче каннă чухне кунĕ-кунĕпе ишеттĕмĕр, нумай чухне – маскăпа. Каннă чухне эпир çавăн пекех йогăпа аппаланма юрататпăр – ку тĕртĕмсене çирĕплетет.

### Эх, çамрăклăх

**– Эсир хăвăр çулăрсенчен самай çамрăкрах курăнатăр. Пите пăхмалли вăрттăнлăхсене те усаймăр-и?**

– Инъекци тумастăп, косметолог патĕнчен тухма пĕлмесĕр массажа та çӳреместĕп. Çав вăхăтрах пит çинчи ӳтпе кăткăслăх çук тесе калаймăп. Аллерги те тăтăшах аптратать мана. Çавăнпа крем суйланă чух икĕ критерие пăхăнатăп – вăл шăршăсăр тата гиппоаллергенлă пултăр. Пĕррехинче Кирилл Францире кăларнă питĕ хаклă крем парнеленĕччĕ. Тĕлĕнмелле хăрушă аллерги пуçланчĕ...

Йăлтах хамăршăн мĕн юрăхлине суйласа илмелле. Нумаях пулмасть Настя Японире кăларнă крем парнелерĕ – вăл вара юрарĕ. Çавăнпа та малтанах специалистпа канашлани пăсмĕ – вăл сирĕн ӳтшĕн мĕн юрăхлине палăртĕ.

### Çăлтăртан – кавăн яшкин рецепчĕ

Шывĕ вĕреме кĕнĕ кастрюле кавăн тураса яратпăр. Сельдерей икĕ тунине, кишĕр, тăрăхла кавăн, 1-2 çĕрулми чăмтаратпăр. 20-25 минут вĕрететпĕр. Пахчаçимĕçе кастрюльтен кăларса блендерпа вĕтететпĕр те яшка пек пулмалăх бульон хушатпăр.

Сухана тата помидора /унăн хуппине сӳмелле/ вĕтĕр турася олива /ытти те юрать/ çăвĕпе ăшалатпăр. Унтан каллех блендерпа вĕ-тетсе ытти пахчаçимĕçпе хутăштаратпăр. Тăвар, пăрăç яратпăр – ĕнтĕ турилккесене антарма та юрать. Сĕтел çине лартас умĕн кашни турилккене вĕттĕн туранă чĕрĕ помидор хушатпăр.



***Интервью вĕçленнĕ май çакна та хушса хурас килет. Вера Глаголевăн чи кĕçĕн хĕрĕ Анастасия паллă хоккеистăн, чаплă каччăн чунчĕрине тыткăна илнĕ – 29 çулти спортсмен 21-ри чиперккепе тĕл пулать. Çакна спортсмен Instagram сайтри хăйĕн микроблогĕнче пĕлтернĕ.***

***Овечкин хутшăнусенче йăпăлтан пулă пек выляманнине пурте пĕлеççĕ. Иртнĕ çул вăл Мария Кириленко теннисисткăпа виçĕ çул туслă пулнă хыççăн çыхăну тытма пăрахнă. Анастасия Шубская вара маларах Артем Большаковпа, Нью-Йоркра вĕренекен студентпа, тĕл пулнă.***

***Анастасия ВГИК продюсер факультетĕнчен вĕренсе тухнă. Унăн ашшĕ Кирилл Шубский – паллă бизнесмен.***

# Сывлăхлă пулăр

**Ытлашши килограмсем çулсем иртнĕ майăн тĕлĕнмелле хăвăртлăхпа хушăнса пыраççĕ. Анчах та спортзал та, диета та сирĕн валли мар-и? Пăшăрханма ан васкăр. Çак меслетсемпе усă курса пăхăр.**

**Шăл тасатма тата ятарлă çиппе усă курма ан манăр.** Унсăрăн шăл туни çинчи бактерисем юна лекме пултараççĕ. Çапла тĕрлĕ чир пуçараççĕ. Ятарлă çип алă айĕнче пулмасан иçĕм çырли çимелле – вăл шăл туни бактерийĕсене аталанма памасть.

**Лавкка тăрăх çӳрĕр.** Анчах та хаксене курса тарăхма мар. Çак "походран" усси пултăр тесен хăвăрт утса çӳремелле, лифтпа усă курмалла мар, картлашкасемпе çуран улăхмалла, унсăр пуçне хаксене астуса юлма тăрăшмалла, вĕсене танлаштармалла: йăлтах – ăсра. Çапла ытлашши килограмсем те чакĕç, Альцгеймер чирĕ те хăратмĕ – пуç мими пĕр канмасăр тенĕ пек ĕçлет-çке. Лавккана çӳреме укçа çук-и? Пахчара пилĕк авни те, турист клубне çырăнни те, баскетбол е ытти вăйă та çакăн пекех витĕмлĕ.

**Тĕксĕм шăккалат çийĕр.** Унри антиоксидантсем ватăласран сыхлаççĕ кăна мар, тромб пулассинчен те, чĕре чирĕсенчен те хӳтĕлеççĕ. Тĕксĕм иçĕм çырли, хĕрлĕ эрех, панулми те – çак ретрех.

**Ытларах кулăр.** Ăсчахсем кунне пĕр хут та пулин чунтан ахăлтатса кулма сĕнеççĕ. Кулни юн тымарĕсене сарма пулăшать, ку вара каллех чĕре чирĕсенчен хӳтĕлет.

**Тăтăшрах савăшăр.** Ар çыхăнăвне час-часах кĕрекен арçынсен ĕмĕрĕ вăрăмрах пулнине калаççĕ ăсчахсем. Çемьере телей тупнисемшĕн шăнса чирлесси те, депресси те, чĕре чирĕсем те хăрушă мар. Тепĕр тесен, чĕре таппине ташласа та хăвăртлатма пулать.

**Çителĕклĕ çывăрăр.** Ыйхă астăвăма лайăхлатать, тимлĕхе ӳстерет, кĕлетке йывăрăшне йĕркелет. Часчасах çывăрса тăранманнисем самăрлăх чирĕпе ытларах аптраççĕ. Талăкра вăтаман 7-9 сехет çывăрмалла.

**Йогăпа туслашăр.** Ку кĕлетке пиçĕлĕхне ӳстерет, артритпа аптракансемшĕн уйрăмах усăллă. Ишни, теннисла выляни те çак тĕллевсенех пурнăçлаççĕ.

**Мăйăр çийĕр.** Пĕр чĕптĕм миндаль те юнри япăх холестерин /вăл вара чĕре чирĕсене кăна мар, рак пуçарма та пултарать/ шайне чакарать.

**Медитаци ирттерĕр е кĕлĕ вулăр.** Вĕсем юн пусăмне чакараççĕ, пăшăрханнине ирттереççĕ, стреспа кĕрешеççĕ, çапла майпа ĕмĕре те тăсаççĕ. Мĕн чухлă вăхăт кирлĕ çакна валли? Ăсчахсем кунсерен сахалтан та 20 минут уйăрма сĕнеççĕ.

**Инди кухнине юратăр.** Тĕпчевсем çакна çирĕплетеççĕ: куркума, карри пăрăç чĕре, Альцгеймер чирĕсемпе, ракпа кĕрешеççĕ.





– Виçĕ çулти Макçăма асламăшĕ çисе ярас пек чуптăвать.

– Эпĕ чĕрĕ вĕт-ха, чĕрĕ! – хĕрарăм аллинчен вĕçерĕнесшĕн тапăлтатать арçын ача.

* * *

Ача ÿсекен кил-çуртра тирпейлес тени – картишне тăман вĕçтернĕ вăхăтра юртан тасатас тениех.

* * *

Поликлиникăра тухтăр пепке мĕнле илтнине тĕрĕслет. Çавна май пăшăлтататать:

– Канфет...

– Мана юрамасть. Аллерги... – çавăн пекех пăшăлтатать шăпăрлан хирĕç.

* * *

## И-ХИ-ХИК

Шкултан килнĕ хĕрача ашшĕне дневник кăтартать. Йăлт лайăх паллăсем кăна – "пиллĕк" те "тăваттă".

– Ак ку мĕн тата? – ыйтать ашшĕ вĕрентекен темĕн çырнине асăрхаса.

– Нумай калаçнăшăн асăрхаттарни. Енчен те эпĕ малашне те хама çаплах тытсан вăл хăш-пĕр меслете хута яма шантарать.

Ашшĕ дневникра алă пусать. Унтан вăл та хушса çырать: "Енчен те сирĕн меслет витĕмлĕ пулсан мана та паллаштарăр-ха унпа – арăм тĕлĕшпе çакăн пек асăрхаттарăвах пур".

* * *

Пĕрремĕш класра вĕренекен Петя шкултан таврăннă.

– Мĕн каласа кăтартрĕç-ха паян шкулта? – ыйтаççĕ унран.

– Пушкинăн ылтăн пулли çинчен вуларăмăр.

– Мĕне вĕрентрĕ вара вăл юмах сана?

– Мĕне-мĕне? Паянхи обществăра халăх нушисене тивĕçтерме кăткăслансах пыни этемлĕхе экологи тата гуманитари катастрофи патне илсе çитерме пултарать!

* * *

Арçын ывăлĕпе лавккана кайнă. Шăпăрлан хаклă тетте илсе пама ыйтать, ашшĕн вара ун чухлĕ укçа çук. Ача хурах кăшкăрса макăрать, урайне выртса тапăлтататать. Йĕри-тавра халăх пуçтарăнма тытăнать. Мĕн тумалла? Шăп çав самантра арçын инçех те мар "Психолог" тесе çырнă алăка асăрхать. Ачине ярса илет те унта сĕтĕрсе кĕрсе каять. Психолог йăл кулса арçынна тухма ыйтать. Пĕр самантранах ывăлĕ те тухать. Куççульне шăла-шăла ашшĕ патне пырать, каçару ыйтать. Киле таврăннă май арçын ниçта кайса кĕреймест – психолог арçын ачана мĕнле майпа çапла хăвăрт лăплантарма пултарнине пĕлес килет-çке. Юлашкинчен чăтаймасть, çапах та ывăлĕнчен ыйтать: мĕн каланă-ха ăна психолог? "Нимех те каламан, – тет лешĕ. – "Макăрма чарăнмасан лекет", – терĕ, çавă кăна..."

* * *

Банкра çыру илнĕ. "Хаклă банкирсем, – çырнă унта ача почеркĕпе. – Тархасшăн, кредитсен процентне чакарăр-ха! Анне пĕтĕм укçана сирĕн пата çĕклет, манăн вара тахçанах велосипедпа ярăнас килет! Сережа".

* * *

7 çулти арçын ача "Место встречи изменить нельзя" фильм пăхать. Шăпах нумай ача амăшĕн Шурăн çăкăр карточкисене вăрланине кăтартаççĕ. Шура макăрать – пепкисене мĕн çитермелле халĕ? Кÿршисем ăна лăплантарма тăрăшаççĕ. Арçын ачан та кăмăлĕ хуçăлни сисĕнет – кĕç-вĕç йĕрсе яма хатĕр.

– Сана тата мĕн пулнă? – ыйтать амăшĕ. – Эсĕ хăть çак хĕрарăм мĕншĕн макăрнине ăнланатăн-и?

– Мĕн ăнланмалла марри пур унта? – тет арçын ача. – Курмастăн-им: унăн пур карточкине те вăрланă – кредитлине те, шалуллине те... э, тата мĕнлеччĕ-ха... а, дисконтлине те!

"Вăт "Пепси ăрăвĕ"! – шухăшлать хĕрарăм. – Юрать-ха хăть çыншăн кулянма пĕлеççĕ..."

* * *

Арçын тĕпелте савăт-сапа çăвать.

– Атте, эсĕ анне патĕнче миçе çул ĕçлетĕн? – ыйтать ывăлĕ.

* * *

Арçын ывăлне пурте пĕлекен тупмалли юмаха парать: "Пĕрре самăрăлать, тепре начарланать, çурчĕпе шăв-шав çĕклет. Мĕн ку?" "Анне", – пĕр вăхăт шухăшланă хыççăн хуравлать ача. Тупмалли юмах тупсăмĕ вара – купăс...

* * *

Кукамăшĕ-асламăшĕ пăхма пултарсан та пепкĕре ача садне хăть пĕр-икĕ эрнелĕхе çÿретĕр – кайран хăнасен умĕнче намăс пулмĕ, çав сăмахсене вăл ăçтан вĕренсе килнине çăмăллăнах ăнлантарăр.

* * *

Арçынпа хĕрарăм пиллĕкри ывăлĕ умĕнчех питĕ хытă харкашаççĕ. Çакăн хыççăн ача амăшĕ патне пырса ыйтать:

– Анне, эсĕ аттепе миçе çул пĕрле пурăнатăн?

– Улттă, ывăлăм...

– Тата миçе юлчĕ?

* * *

Арçын ывăлĕн тетрадьне тĕрĕслет.

– Ку çекĕлсене мĕншĕн хитре çырмастăн вара эсĕ? Курха: йăлт кукăр-макăр...

– Атте, çекĕл мар ку – интеграл...


## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРЎСЕМ

### СУТАТĂП ПРОДАЮ

**2.АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ,** пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 28 руб., 9х20х40 – 24 руб. Высокое качество. Доставка манипулятором. Т. 8-967-470-46-77.

**3.АКЦИЯ! ПЕСОК, ГРАВМАССУ,** щебень, керамзит. По низким ценам. Доставка. Т. 8-967-470-46-77.

**4.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер. Доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидровибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7.ГРАВМАССУ, ПЕСОК, щебень, керамзит,** чернозём. Дёшево. Доставка. Т.: 8-903-358-17-70, 8-927-668-97-13, 38-97-13.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Дёшево. Доставка. Т.: 89033583021, 44-30-21.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**17. Песок, гравмассу, керамзит,** чернозём, **навоз.** Доставка. Т. 8-905-197-40-19.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 89176757528.

**22.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 89278558355.**

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ,** косилки, **сажалки,** копалки, **окучники, опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **к/кольца.** Доставка. Т. 89033468556.

**29.Опрыскиватели, окучники, косилки,** грабли, погрузчики, доильные аппараты. **Распродажа!** Доставка! Т.: 8-937-955-98-02, 8-937-375-80-95.

**30.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**31.Гравмассу, песок, керамзит,** кирп. бой. Д-ка. Т. 89033225766.

**37.**Ворота, калитки, **заборы,** навесы. **Ковка,** кровля, обшивка сайдингом. Общестроительные и сварочные работы. Замер. Д-ка. Установка. Гарантия. **Пенсионерам – скидки.** Т.: 8-902-288-14-47, 38-75-74, сайт:metalservis21.ru

**41.Гравмассу, гравий, песок** речной, карьерный; **щебень,** керамзит. Д-ка. Т. 89278404595.

**48.Керамблоки, бой** кирпича, бетона; сваи, **ОПГС,** песок, **ФБС.** Т. 89063814420.

**58.Гравмассу, щебень, песок, керамзит,** бетон, чернозём. Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**59.ТЕПЛИЦЫ от производителя.** Низкие цены. Т. 48-16-54.

**65.Песок, гравмассу,** бой кирпича, **щебень** известк-й, чернозём. Т.: 89196567752, 89093005705.

**66.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Уч-м ВОВ и пенсионерам – **скидки.** Т. 89176769379.

**74.Керамблоки** вибропрессованные, пропаренные. Все размеры. Доставка. Т. 89176776846.

**89.БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. Т. 89373866629.

**123.Гравмассу, песок, навоз.** Доставка по старым ценам. Т. 8-927-850-28-21.

**127.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната** от производителя. Т. 8-919-679-47-04.

**128.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната** от производителя. Т. 8-927-667-62-02.

**133.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя около 100 видов, **сетку** сварную, кладочную, штукатурную; **проволоку,** столбы. Доставка. Т.: 68-30-45, 8-937-952-22-11.

**138.ОКНА, ДВЕРИ. Обшивка.** Замер, доставка, демонтаж бесплатно. **Гарантия** 15л. Т. 89196624097.

**170.Профнастил, металлочерепицу, сайдинг.** Т. 89033220479.

**172.Тротуарные ПЛИТЫ, брусчатку.** Доставка, укладка. Скидки. Гарантия. Т. 89033220479.

**183.**Окна Чувашии. **ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, жел. двери.** Т. 89050281182.

**205.Цемент,** песок, **гравмассу,** щебень, **керамзит, блоки.** Д-ка. Т.: 89278497675, 89278497674.

**295.Песок,** ОПГС, **щебень,** известь, асфальтную крошку, **навоз,** землю, **торф.** Доставка. Т.: 89196741016, 89603003816.

**322.ПЕСОК, щебень, гравмассу, керамзит.** Д-ка. Т. 89033220479.

**361.АКЦИЯ! КОЛЬЦА железобетонные** для колодцев и канализаций 0,7; 1; 1,5м. Бурение. Д-ка манипул-м. Т. 8-967-470-46-77.

**364.Пластиковые ОКНА, ДВЕРИ.** Замер - бесплатно. Пенсионерам – скидки. Т. 89278447811.

### ТУЯНАТĂП КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-962-599-47-06.

**39.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**109.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.

### ПУЛĂШУ УСЛУГИ

**38.ЧИСТКА КОЛОДЦЕВ.** Т. 8-961-342-90-59.

**45.Лечение алкоголизма, табакокурения. Т.: 89030662902, 89276673368.** *Лиц. 5001001230 от 08.06.2007. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**51.Бурение колодцев,** скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

**171.Кровельные, фасадные работы.** Т. 8-903-322-04-79.

**197.Бурение скважин на воду.** Опыт, качество. Т. 89656876888.

**246.Бурение скважин** на воду. **Чистка** старых **скважин.** Т. 8-906-381-60-37.

**342.Доставка:** навоз, торф, чернозём, сыпучие материалы. Доставка. Тел. 8-919-650-39-91.

**343.Доставка:** ОПГС, песок /речной, карьерный/, щебень, асфальтная крошка, керамзит. Тел. 89196503991.

**345.Любая КРОВЛЯ.** Т. 29-29-73.

**346. Брусчатку, плитку.** Т.: 29-29-73.

**379.Кивелнĕ электропроводка – пушар хăрушлăхĕ.** Ялти çуртсенчи электропроводкăна çĕннипе улăштаратпăр. Материалĕ хаклă мар. Тел. 8-937-015-35-40.

### ĔÇ РАБОТА

**297.Требуются каменщики, монолитчики** в Москву. Оплата своевременная. Т. 8-962-321-70-11.


« ХЫПАР »
Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор В.В.ТУРКАЙ

Чăваш ХĔРАРĂМĔ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – Е.М.АТАМАНОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службин 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ
ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.
Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07
Электрон почти: hypar@mail.ru

Хаçатри рекламăсăр тÿлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшÿллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Номере 05.06.2015 алă пуснă. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 8198. Заказ 2138.